Николай Угарин

# ЧЕЧЕК ĂШĔНЧИ ÇУРТ

(драма)

Драмăри çынсем:

АШШĔ
МАРК – унăн ывăлĕ
АНДРЕЙ – Маркпа пĕр çулти каччă
МАРИНА

## Пĕрремĕш пайĕ

***1 картина.** Вăрман витĕр иртсе каякан аслă çул хĕрринчи кафеĕ Тĕттĕмленнĕ, тулта вăйлă çумăр çăвать. Марина кантăк умĕнче такама пăлханса кĕтсе тăрать. Кайран сасартăк ĕç тумне хывса пăрахать те, кайма пуçтарăнать. Çав вăхăтра урамран Андрей кĕрет. Ун аллинче пĕр çыхă чечек.*

МАРИНА. Çук-çук, ан кĕрĕр, кафене хупатăп.
АНДРЕЙ. Эп нумăйлăха мар.
МАРИНА. Апат та нимĕн те юлман.
АНДРЕЙ. Эп çиес тенипе мар.
МАРИНА. Эсир яланах сĕмсĕр-и?
АНДРЕЙ. Мĕншĕн «эсир»? Сирĕнпе... Санпа пирвайхи хут. *(Чечек çыххинчен пĕр чечекне илсе сĕнет.)*
МАРИНА. Тавтапуç, анчах...
АНДРЕЙ. Сана чечекĕн тĕсĕ килĕшмерĕ-и? Тен ак çакна парас? Тен кăна? Каçар та, çыххипех пама пултараймастăп.
МАРИНА. Эпĕ ыйтмарăм-çке.
АНДРЕЙ. Эп ыйтмасан та панă пулăттăм, анчахта тепĕр чух.
МАРИНА. Эс мĕн, чечек валеçекен-и?
АНДРЕЙ. Эп кашнинех памастăп, юратнине анчах,.. Е кăмăлланине. Кăмăллă çынна чечек пама та кăмăллă. Анчах та пурпĕр эп сан кăмăлна уçма пĕлмерĕм, чечек те пулăшмарĕ.
МАРИНА. Пурин умĕнче те кăмăла уçсан, эсир, арçынсем, кăна урăхла та ăнланма пăхатăр.
АНДРЕЙ. Кăлăхах эс, эп апла шутламан. Çумăр иртсе кайиччен хўтлĕх кирлĕ пулчĕ. Мĕнле хитре, ăшă кунсем

тăчĕç, паян вара сив çумăр, сивĕ çил... Кунта ăшă, пăрланнă ӳт те ислене каять.
МАРИНА. Ӳт исленет пуль те... Ман чăн та вăхăт çук. Тархасшăн, эп ыйтап сана...
АНДРЕЙ. Юрĕ, питĕр, атту чăнах та сĕмсĕрле эп. Тухмалла марччĕ Чăн та ман паян. Çанталăка пĕлсе пĕтерейместĕн, сасартăк урса кайнă евĕр пĕтĕм вăйне йӳле ярать те... Те канăç тупасса кĕтсе, те хăй çулĕ çинчисене пĕтĕмпех аркатса тăкас тесе.
АНДРЕЙ. Вăйа йӳле янипех канăç килет-и?
МАРИНА. Килмест те пуль, анчах та пулăшать. Антив ултавлă канăç пултăр, анчах вăл пурпĕр канăç. Тепĕр чухне самант та тем татса парать. Ялан йĕп çинчи пек пурăнас килмест-çке, канăçлă та пулас килет.
МАРИНА. Сан сăмахусем çӳçентереç.
АНДРЕЙ. Енчен те урăхла май çук пулсан...
МАРИНА. Юрĕ, мĕн çиетĕн?
АНДРЕЙ. Санăн чăнах та каймалла пулсан...
МАРИНА *(сасартăк урса).* Сана мĕн ĕç?! Яланах çавăн пек, ыйтмасăр сĕкĕнсе кĕреççĕ те... Çиетĕн-и е çук?!
АНДРЕЙ. Пĕлместĕп. Каçар мана, эп...
МАРИНА. Ху каçар. Эп пачах та вăрçса тăкас теменччĕ, хăйне хăй тухса кайрĕ. Кунĕ йывăр пулчĕ.

*Марина кухняна кĕрсе каять. Андрей аякра гитара курса илет те выляса ĕнĕрлет. Кăшт тăрсан Марина ун умне вĕри апатпа пĕр стакан чей пырса лартать.*

Тархасшăн.
АНДРЕЙ. Тавтапуç. *(Гитара çине кăтартса.)* Камăн?
МАРИНА. Пĕри хăварнăччĕ.
АНДРЕЙ *(çисе).* Тутлă. Тен эсĕ те манпа...
МАРИНА. Эп тутă. *(Пауза.)* Кам эс? Кунта ял мар, машиналлă çынсем çеç чарăнаççĕ тата вăрмана кĕрсе аташса каякансем çул çинчи машинасен сассисене илтсе хутран-ситрен килсе тухаççĕ.
АНДРЕЙ. Мана аташса каякансен шутне кĕртсен тĕрĕсрех пулĕ.
МАРИНА. Эс юлашки автобусран анса юлтăн.

АНДРЕЙ. Аташма вăрмана кĕмесĕр те пулать, тӳрĕ çулпа утсан та такăнма, тăнă çĕртех ӳкме, ăш çĕрте чĕтреме...
МАРИНА. Çи часрах, мĕн мана сăнаса ларатăн?! Хампа эп хам хуçа: чĕтрес тесен чĕтретĕп, йĕрес тесен йĕретĕп. Çын тĕрлĕ, кам ăшшалла туртăнать, кам сив çумăр айне. Пит-куçа пит уçас тенĕ Чухне сив çумăрĕ те вырăннлă. Ăшша хăнăхнисем ăна тараççĕ, кăшт çӳçенсенех пуçне усаççĕ. Эп вара... Сив çумăр мана хăратмасть, халь тесен халь тухса утатăп. Чечек парнеленине мар, хамран мĕн пуррине туртса илнине çеç хăнăхнă эп, тата çийĕнчен çавăншăн хама айăпланине.
АНДРЕЙ. Ун пеккине хăнăхма кирлĕ мар*. (Чей сĕнет.)* Акă ĕç, лăнплан. Тутлă вăл, пылак, куççуль пек мар. Куççуль çапла пуласчĕ. *(Маринан куççульне аллипе шăлса илет.)*
МАРИНА *(чей ĕçнĕ хыççăн).* Сан куçусем урăх, хăратмаç, хăранине сирсе ярас. Ун пек куçсем сайра. Кам валли ку чечексем?
АНДРЕЙ. Чи çывăх çын валли.
МАРИНА. Паллах, çывăх маррине кам-ха чечек парнелетĕр?
АНДРЕЙ. Сана никам та чечек парнелемен-и?
МАРИНА *(кулярах).* Çук, парнелерĕ Халь çеç пĕри.
АНДРЕЙ. Вăт кун пек лайăхрах, кун пек кăмăллă. Тепрехин эпĕ ятарласа икĕ çыхă илсе килетĕп.
МАРИНА. Чĕрене икке пайлаймăн.
АНДРЕЙ. Эп пайламасăрах. Ан кулян, нушаллă çын çĕр çинче эс кăна мар*. (Гитара илсе ĕнĕрлет.)*
МАРИНА. Хăш чух çав лăплантарать те. Манран та нушалллăраххисем пур тетĕн те... Ĕç хыççăн манăн хăш чухне яла çити çуран утма тивет. Кунта инçе мар, ик çухрăмран ытла пулмасть. Анчах ик çухрăмра та çак çул хĕрринче пилĕк палăкЁ Кам машинапа çапăнса вилнĕ, кама вĕлернĕ, кам хăйне хăй çăка тураттинчен...
АНДРЕЙ (гитарине хурса). Унта  сан эрехсем лараççĕ. Пĕрне илме юрать-и? Ман укçа пур.
МАРИНА. Ил.

*Андрей кайса эрехпе икĕ Стакан илсе килет. Тепре кайса çĕçĕ илсе килет те эрех пăккине уçса стакансем çине ярать, пĕрне Маринана сĕнет.*

АНДРЕЙ. Пурнăç нумай ăнăсртлăхран тăрать. Ăнсăртран тĕл пулаç çынсем пĕр-пĕринпе, ăнсăртран уйрăлаç, ăнсăртранах телейĕ Те килет хăш чух, ăнсăртранах инкекĕ те. Пур ырă ăнсăртлăх, пур усалли. Нихçан та текех усалли пирĕн тĕле ан пултăр. *(Эрехне ĕçсе ярать.)* Кĕт мана, яла çити пĕрле утăпăр, эпĕ часах. *(Чечек çыххине илсе тухса каять.)*

*Кăшт тăрсан кафе патне машина килсе чарăнать, Марина хăраса каfive. Марк вирхĕнсе кĕрет те, тӳрех Марина патне пырса, ăна хулĕнчен ярса илет.*

МАРК. Кам хушнă сана? Сана калаç, кам хушнă пурне те пĕлтерме?!

МАРИНА. Эп никама та ним те каламан.

МАРК. Пĕтĕм ял калаçать.

МАРИНА. Анне сисрĕ, вăл вара... Яр, эс мана ыраттаран.

МАРК. Ыраттаран? Эс мана ыраттармастăн-и? Эп сана desка карăм-и çурат тесе, каларăм-и? Е кун пек ирĕксĕр те пулин качча илĕ Терĕн-и? Пыр, чуп милицие, каласа пар, мăшкăлларĕ Те. Анчах çакна пĕл: эп нихăçан та сан пулмастăп, эп ирĕклĕ. Ман ним те çук, ман никам та çук. Чуна лăплантаракан та ирĕклĕх анчах. Ăна та эс туртса илес тетĕн пулсан...

МАРИНА. Кай кунтан. Эп сана ыйтман, хыçран та çӳремен. Чуну кӳтсе килсен ялан кунта килеттĕн, ахаль чухне эс ман пирки аса та илмен, ыттисемпе киленнĕ.

МАРК. Пĕрин куçĕнчен çеç пăхса ларма эп шутламастăп. Мĕншĕн тесен эп юратмап. Юратма мар, эп кураймастăп пурсăра та. Эсĕ те çавах, эсĕ те кураймастăн. Халь кăна мар, малтан та курайман. *(Марина ăна тем каласшăн.)* Ан хирĕçле, ман пеккине юратма çук. Эп шпана, эп алкаш, эп вăрă, эп пусмăрçă, усал... Тата мĕн мантăм? Ачана вара телей курма çуратмалла, шар курма мар. Эс вара ăна шар кăтартасшăн. Пĕчĕк ача ним те ăнланмасть-ха теç пуль, ăнлансан та кӳренмĕ теç пуль, кӳренес пулсассăн та пĕр тетте е канихвит илсе парсанах каçарĕ теç пуль. *(Кăкăрне шаккаса.)* Анчах ак çакăнта сăнă пек кĕрсе ларнă сăмах нихăçан та тăхса ӳкес çук. Ахалехваскатăн эсĕ çуратма. Енчен манранах çуратас тетĕн пулсан, вăхăт çитсен сана хамах каланă пулăттăм çурат тесе, качча та илĕттĕм. Анчах та халĕ... Çĕр çине хам пек

тепĕр ытлашши çын çуралма эп ирĕк памастăп. Кая юличчен хăтăл унран. *(Маринана хыçал енчен ярса илсе хырăмне пăвать.)*
МАРИНА *(хăтăлса).* Çук! Кай кунтан, хăп ман çумран! Тек ан та кил, пурăн ирĕклĕ. Сан тивĕç çук. Вăл санран мар, вăл санран мар!
МАРК. Мĕн? Мĕн терĕн эс? Эп сана*... (Маринана çупа-çупа ярать, кайран аяккине кайса кукленсе йĕрет.)*
МАРИНА. Марк, каçар мана, каçар. Эп ун пек каласшăн марччĕ. Хăтăл тенипе юри...
МАРК *(Маринана сирсе).* Кай! Веç пурччĕ Манăн: атте, анне. Сана та эп куç хывнăччĕ. Хăçан та пулин ик аллăма хам ачана тытас тесен, ун амăшне санра кăна кураттăм. Эс вăхăтаваскатман пулсан, эп сана кайран тен ал çине те çĕклĕттĕм. Анчах хам ирĕкпе, вăхăт çитсен. Хистенипе вара – нихçан та! Утарçă хушнипе – пушшех те.
МАРИНА. Утарçă мар вăл, сан аçу.
МАРК. Эп кураймастăп ăна айван пулнăшăн, çине тăманшăн, арăмне те теприне пурăнма май туса панăшăн. Вĕллисем ăшне кĕрсе ларнă та тухма пĕлмест. Тата чечекĕсем ăшне. Таптаса тухатăп эп вăл чечксене, вĕллисене те веç вататăп, çуртне те çунтаратăп - нимĕн те ан юлтăр. Унăн тĕллевĕ пурпĕр манра мар, чечек ăшĕнчи утар çурчĕ те, вĕллисем те, машини те...
МАРИНА. Аçупа аннӳнтен хăтăличчен юлташусенчен хăтăласчĕ сан. Вĕсем сан пурнăçна пăтратаççĕ, вĕсем сан куçу умне хура чаршав карнă. Çук, ирĕкре мар эс, тыткăнра. Ырăпа вĕçленмест сан пурнăçу, тăна кĕр. Чечек ăшне путни шурлăха кĕрсе ӳкни мар. Аçуна ӳпкелетĕн, эс ху ун енне çур утăм ярса пусрăна, ун çине хăть пĕрре ăшшăн пăхрăна? *(Марк стаканри эрехе ĕçсе ярать.)* Ан ĕç тек. Нуша çукран нуша шыратăн эс, аçуна та нушалантаратăн. Эс ун патне пырса кайсан, вăл тарăхнипе кунта килет те пĕр кĕленче илсе çав кĕтессе кайса ĕçсе ларать. Хăйĕн куçĕсенчен шăпăртатса куççуль юхать. Вăл лайăх çын, вăл юратать сана. Эсĕ ăна вырăна хуманран тен кӳренет те пуль, анчах юратма пăрахмасть. Шелле ăна.

МАРК. Шеллеве тивӗçлисене шеллемелле, тивӗçлӗ маррисене вара... Халь вӑл килсе кайрӗ-и кунта? Эс унпа ӗçсе лартӑн-и кунта? Ку чечекӗ Те унӑнах-и? Çавӑнпа-и-ха эс ун майлӑ çаптарма пуçланӑ. Ма килчӗ вӑл кунта, мӗнле сӗнӳпе? Утара пурӑнма куç терӗ-и? Кам шутӗнче, кин шутӗнче-и? Эп сана сӑмах паман. Ман урлӑ эс ун кинӗ пулаймастӑн. Тен арӑм шутӗнче? Марк пӑрахсан та, эпӗ пӑрахмӑп терӗ-и? Хӑвна та, ачуна та хамӑн тӑвӑп терӗ-и? Кала! Эп сире ун чухне иксӗре те...

*Марк сӗтел çинчи çӗççе ярса илет те, Маринана хӑмсарать. Çав вӑхӑтра Андрей кӗрет, чупса пырса тӳрех Марка аллинчен ярса илет, çӗçӗллӗ аллине пӑрса лартма пикенет.*

АНДРЕЙ. Мӗн тӑватӑн эс?!

МАРК. Ку тата кам?

АНДРЕЙ. Пӑрах çӗççӳне! Пӑрах теп çӗççӳне!

*Кӗрешнӗ май Марк сулӑнса кайса сисмесӗрех хӑйне хӑй чикет, кӑшкӑрса ярать те тӗшӗрӗлсе ӳкет.*

МАРИНА. Турӑçӑм! (Андрейе.) Мӗн туса хутӑн эс?

АНДРЕЙ. Эп ун çӗççине туртса илесшӗнччӗ.

МАРИНА *(кантӑкран пӑхса).* Юлташӗсем сисрӗç, машинаран тухаççӗ. Вӗсем сана вӗлереç. Вӗсем уншӑн тем тума та хатӗр.

АНДРЕЙ. Эп ӑна чикес темен, вӑл хӑйне хӑй...

МАРИНА. Халь тин пурпӗр мар-и?

АНДРЕЙ. Ӑна часрах больницана илсе каймалла.

МАРИНА. Сансӑрах илсе каяççӗ. Тар хыçалти алӑкран.

АНДРЕЙ. Сире çакӑн пек пӑрахса-и?

МАРИНА. Вӗсем мана тӗкӗнес çук. Тар вӑрман ӑшне. Кун пек иксӗмӗр те сывӑ юлатпӑр. Тар! *(Андрее чышса кӑларса ярать.)*

*Çутӑ сӳнет.*

**2картина. Утарçӑ пӳрчӗ. Ашшӗ сӗтел хушшинче ларать. Ун умӗнче пушӑ эрех кӗленчипе черкке. Алӑка хытӑ шаккаççӗ.**

АШШĔ *(хускалмасăр).* Килтĕне, чупкăн? Ма таврăнтăн? кай хăвăн çулупа, курам та мар сана тек. Çакна курма çуратса яман эпĕ сана. Хăть çĕмĕр, хăть çунтар, хăть веç- аркат – пурпĕр уçмастăп. Кай чупкăн аннӳ патне.

АНДРЕЙ САССИ. Пичче, уç! Уç, тархасшăн.

АШШĔ *(сиксе тăрса).* Мĕн? Кам? Кам унта?!

АНДРЕЙ. Эпĕ! Уç.

АШШĔ. Кам тата çӳрет çĕр варринче*? (Тухать те кăшт тăрсан Андрейпа таврăнать.*) Ирт.

АНДРЕЙ. Çумăр чарăна пĕлмест. Ывăнтăм та, тек каяймастăп.

АШШĔ. Аташса кайрăн-и?

АНДРЕЙ. Çапла, аташрăм пулмалла. Эпĕ тулта вĕллесем çине пырса тăрăнтăм. Ку утар-и?

АШШĔ. Утар. Эс витĕр йĕпеннĕ. Хывса пăрах çийĕнти тумтирне. *(Кĕпере шăлавар тупса.)* Ак ме типпине тăхăн. Ывăлăн, сана юрама тивĕç.

АНДРЕЙ. Эп шăнман, эп...

АШШĔ. Йĕпе тумпа ан лар. Эп час юна вĕрилентерекене илсе кĕретĕп, пĕтменччĕ-ха унта*. (Сĕтел çинчен пушă эрех савăтне илсе тухса каять. Андрей тумне улăштарать. Кĕрсен.)* Ак шăпах сан ята юлнă пек. Юлашкине сăрăхтарса илтĕм. Тăмасть. Ывăл юлташĕсене ертсе килет те... Юлашки вăхăтра ун хыççăн хам та... Вăт çуратса янă вĕт эteme çĕр çине. Ырра шанатăн, йăх тăсакан çуралчĕ тетĕн, уншăн нушаланатăн. Вăл вара... Юрĕ, ун çинчен калаçар мар. Лар сĕтел хушшине*. (Андрей сĕтел хушшине пырса ларать.)* Ĕç ак, часрах ăшăнан. *(Андрейе пĕр черкке ярса парать, Андрей ĕçет.)*

АНДРЕЙ *(тăнласа).* Шаккаççĕ-и?

АШШĔ. Çук, çил пӳрт çивиттине силлет. Ав еплерех тулашать çанталăк. Паянхи каç эс мар, хам та аташăп. Кĕр çывхарать пулас, çанталăк пăсăлса пырать. Атту пулсан аташмалли вырăн мар кунта. Çил анăç енчен мар пулсан, машинасем çул çийĕн вăш та вăш туса иртни илтĕнсех тăрать. Хăш ялсем пулатăн-ха?

АНДРЕЙ. Аякран.

АШШĔ. Кунта вара мĕн çăмăлпа килсеччĕ?

АНДРЕЙ. Нуша туртнипе.

АШШĔ. Паллах, паллах... Нушасăр çын пур-ши халь çĕр çинче? Нуша çула илсе тухать те. Тата тепĕр чухне нушине хамăрах тăватпăр. Тĕк пурăннă чухнех тем сиктерсе кăларатпăр та... Кам шутланă вĕт çакăн пек пулса тухасса. Кама айăпламалла халь: хăйне-и е хĕрне? Вăл ачаш та черченкĕ чуна епле айăплăн? Мĕн чухлĕ Ăшă туйăм унăн ăшĕнче, мĕн чухлĕ тараватлăх. Ун пек хĕре упрамалла, ман йĕксĕк вара ăна... Эс ăнланма пултаратăн-и çакна?

АНДРЕЙ. Эпĕ халь...

АШШĔ. Эп те ăнланаймастăп çав. Пуçне çухатрĕ, веçех пуçне çухатрĕ. Ну, темех мар, вăл мĕнле пулсан та хĕре кӳрентерме памастăп. Кайран ăнланатех вăл хăйĕн йăнăшне. Йăнăш тума çăмăл, ăна тӳрлетме вара хăш чухне ĕмĕр тăрăшшĕ Те кĕске пулать. *(Черккине тĕллесе.)* Тепрер-и?

АНДРЕЙ. Юрать пулсан.

АШШĔ. Ма ан юратăр? Хамăр килте эпир хамăр хуçа. Теприсем килсе хуçаланма пăхаç пуль те... Йывăр, йывăр тăван тенĕ çынран сивĕ сăмах илтме. Кашни сăмахĕ Чуна лăскать. Антив аркаттăр, вĕллисене те суттăр, пылне те салатса пĕтертĕр, машинине те илсе кайтăр – мĕн тăвас тет, веç тутăр. Анчах ан пăхтăр ман çине çав куççемпе, ан пистĕр ашшĕнчен. Ун куçĕсене те курмăш пулăттăм, анчах та илтмĕш пулаймастăп. Сăмахĕсем ытла та шăртлă. (Ĕçсе ярать.) Ĕç эс, ĕç те çи ав пылĕпе. Ĕçменччĕ эп ку таранччен, вĕлле хурчĕсем ĕçекен çынна юратмаççĕ. Юлашки вăхăтра вара... Ну, майĕ çук! Тепĕр тесен, ма хамăн инкеке санапа пайлатăп-ха. Ăçтисем терĕн эсĕ çак?

АНДРЕЙ. Çураласса эпĕ ку тăрăхрах çуралнă. Атăл хĕрринче пĕр пĕчĕк хула пур, Сенгилей ятлă. Пурăнасса вара...

АШШĔ *(сасартăк чĕрине ярса илет).* Сенгилей? Пĕлетĕп, пĕлетĕп, пулнă эп унта. Лайăх хула, мана килĕшетчĕ. Салтакран таврăнсан шохвĕре вĕренме кайнăччĕ унта, анчах вĕренсе пĕтерейменрĕм. Пурнăç çапла пулса тухрĕ, вăхăтсăр таврăнмалла пулчĕ. Эс калашле, нуша туртнă. Пĕр пĕчĕк йăнăш çеç, анчах вăл та çапла çапса хуçать çын пурнăçне, ĕмĕр тăна кĕреймĕн. Çӳретĕн вара ӳсĕр евĕр: ни унталла, ни кунталла. Ăçта кайса мĕн тумаллине пĕлмесĕр.

АНДРЕЙ. Мĕн тумаллине пĕлсен те халь тин усси çук.
АШШĔ. Çапла, халь тин усси çук, халь тин вилнĕ çынна чĕртсе тăратаймастăн. Вăл вилнĕ, эпир ак пурăнатпăр-ха. Мĕне кĕтсе, кама кĕтсе, ма пурăнатпăр?
АНДРЕЙ. Пĕлместĕп, эп нимĕн те пĕлместĕп.
АШШĔ. Паллах, ку вăл тахçанах пулнă, кун пирки пурте маннă. Эпĕ ак манаймастăп-ха. Юратнă çынна епле манăн-ха? Каçар мана, эп кунта хампа хам... Хăш чухне кама та пулин чуна уçса парас килет-çке. Ывăл мана ăнланмасть, амăшĕ Пирки калаçмастăп та. Çак пыл та йӳçĕ Каласан... Ун йӳçĕ пулмалла мар-çке, пылак пулмалла. Тĕлĕнтермĕш нумай ку пурнăçра. Чи пысăк тĕлĕнтермĕшĕ вара ак çакăнта. (Кăкăрне чăмăрĕпе шаккать.) Чăтать-чăтать те кайран сасартăк... Çитет чăтса, кăçалах каятăп. Вĕллесене хĕл каçма хатĕрлесе хăваратăп та... Телей хăй килсе алăка шаккасса кĕтмелли çук, хам çине тăмасан... Çемйе халь пурпĕрех арканчĕ. Унта ăнăçлă кайса килсен вара, ун хыççăн Марк та улшăнсан... Харăсах туй тăватпăр. Пĕрре кăна та мар, тен иккĕшпех. Мĕнле пысăк телей пулать вара. Урăхла телей мана кирлĕ те мар. Ну, мĕнле унта Сенгилей, ырăнĕнчех ларать пуль?
АНДРЕЙ. Вырăнĕнчех. Atăлĕ те çав еннеллех юхать, сăрт çинчи хурăнсем те кашни иртен пăраххута пуç тайса ăсатаççĕ.
АШШĔ. Пĕлĕтелле самай улăхрĕç пуль ĕнтĕ вăл хурăнсем. Çирĕм çул пулман эпĕ унта. Ма таврăнтăм-ши пĕреххут.
АНДРЕЙ. Пурте пĕр шухăшлă пулманни пĕтерет.
АШШĔ. Çапла, кăна эс тĕрĕс асăрхарăн.
АНДРЕЙ. Вара теприне пулăшас тесе хăвна ирĕксĕрлетĕн те... Хамăртан кăна килмест-çке-ха. Веçех хамăрла тăвас пулсан! Анчах сасартăк ниме тăман ăнсăртлăх килсе çапать те... Шуйтанпа кăна туслашнă ахăр вăл. Аслă çул миçе çухрăмра кунтан?
АШШĔ. Виç çухрăмра. Ма ыйтан вара? каясшăн мар пуль те? Ан та шутла.
АНДРЕЙ. Эп кантăм, ăшăнтăм.
АШШĔ. Ирлесе кайăн.
АНДРЕЙ. Ирччен кĕтме пултараймастăп эпĕ.

АШШĔ. Халь мĕнле кайăн? Çĕр варринче сана нимле машина та лартса каймасть.
АНДРЕЙ. Эпĕ çуран. Кунта инçе мар пĕрне курмалла.
АШШĔ. Ярас килмест сана, кăмăллă эс, Марк пек мар. Ăнланмастпăр эпир унпа пĕр-пĕрне. Тĕрĕссипе каласан, эпир унпа ак санпа калаçнă пек юнашар ларса калаçса та курман. Йĕксĕк вăл, анчах... Пăвса пăрахаймастăн вĕт хăвăн ачуна. Тепĕр тесенĔ ăшĕнче апла мар вăл, юри хăтланать. Тем канăçсăрлантарть ăна, тем уртарать. Мана та пурăнма памасть, амăшне те, хăйĕн те пурăнни мар. Е масар картипе, е тĕрме картипе юнашар утса çӳрет. Мĕн, ĕçес килнĕрен ĕçетĕп-и эпĕ çакна? Çук, чун ыратнăран ĕçетĕп. Эх, инкек пуласса малтанах пĕлнĕ пулсан... Вăл инкекрен пăрăнса та иртме май пулнă-çке.
АНДРЕЙ. Кам пĕлнĕ вĕт инкек пуласса.
АШШĔ. Кам пĕлнĕ çав, кам пĕлнĕ. Киленĕвĕн пылакĕ Самантлăха кăна вăл, юратнипе çеç ĕмĕре. Савманнипе вара... Ăçтан ĕçмесĕр чăтăн-ха! Ăна ĕçсен кăшт çăмăлрах пек.
АНДРЕЙ. Анчах вăл та ултавлă туйăм, самантлăха кăна пырать.
АШШĔ. Çапла-çапла. Ăслă ача эс. Ăшă тапса тăрать санран. Марк килсе кĕрсен вара çӳçентерет. Апла пулмалла мар-çке, унран пушшех те ăшă тапса тăмалла. Юрĕ, ир пултăр-ха, ирхине унпа тепре калаçăп та... (Урамра машина килсе чарăннă сасă илтĕнет.) Кусем тата камсем? Ман пӳтсĕре кӳрсе яраççĕ-ши? Татах кӳпсе лартнă ĕнтĕ. Урă чухне килмест те вăĕ. Çап-çамрăк пуçпа мĕн пĕлсе ĕçет-ши. Пĕтмест те вĕт пĕреххут! Эй, турă, каçарсам. Йывăр чунра, цывăр унпа юнашар чух. Кӳртместĕп, уçмастăп, леçчĕр амăшĕ патне. Сывă упăшка пур чухне теприпе пурăнма кăна мар, ывăлне пăхма та пĕлтĕр. Сан ывăлу мар тет вĕт. Ун пек каласа мана тавăратăп терĕ Пуль. Мана мар, ывăлне тавăрать. Вăл вара иксĕмĕре те. (Машина сигналĕ илтĕнет.)
Кĕртместĕп! Кайăр ăçтан килтĕр, çавăнта. (Машина сигналĕ çине-çинех илтĕнет.) Ну, мĕн кирлĕ тата?! *(Тухать, кăшт тăрсан вăйсăррăн кĕрет.)* Тупрĕ Хăй валли. Каларăм вĕт ăна... Ман каймалла, ывăла пульницана леçнĕ. Такам çĕçĕпе чикнĕ.

АНДРЕЙ. Эпĕ... Эпĕ...
АШШĔ. Эсĕ юл, çĕр варринче ăçта кайăн? Ирччен эп килĕп. Килмесен... Çăра ак кунта. Питĕр те уççине алăк тăррине хурса хăвар. Санпа тата та калаçса ларасшăнччĕ, пулмарĕ. Сан пек хăна сайра килет кунта. Юрĕ, ман каймалла. Эх, пурнăç кустăрми, ăçталла кусаланатăн-ши? *(Тухса каять.)*

*3 картина. Çавăнтах, икĕ Кунран. Ашшĕ турăш кĕтессинче ларать, ун аллинче Библи. Те вулать, те кĕл тăвать – паллă мар. Алăк ерипен уçăлать те, Андрей кĕрсе тăрать.*

АНДРЕЙ. Ку эпĕ.
АШШĔ. А, çĕрлехи хăна. Ирт.
АНДРЕЙ. Кунта та юрĕ.
АШШĔ. Алăк кутĕнче сăвап пулмасть.
АНДРЕЙ. Сăвап? Кирлех-ши вăл мана? Сăвапра ĕç тăрать-и?
АШШĔ. Мĕнре-ха тата? Çынпа çын пĕр-пĕрне сăвап та тумасан...
АНДРЕЙ. Пĕлместĕп, кама тен кирлĕ вăл сăвап туни, кама... Сăвапа тивĕçлĕ пулас тесен, сăваплă ĕç çеç тумалла. Эп...
АШШĔ. Эп унччен сана... Ман каймалла пулчĕ. Хăрамарăн-и пĕччен çĕр каçма?
АНДРЕЙ. Эп кунта çĕр каçман, эп...
АШШĔ. Эпĕ тепĕр кун çеç килтĕм, эсĕ çукчĕ.
АНДРЕЙ. Эпĕ эсир кайсассăнах тухса кайрăм. Алăкне эсир каланă пек питĕрсе хăвартăм.
АШШĔ. Ман хуйхă пулчĕ.
АНДРЕЙ. Эп илтрĕм.
АШШĔ. Ывăл...
АНДРЕЙ. Пĕлетĕп.
АШШĔ. Çавăнпа та ак... *(Библине кăтартать.)*
АНДРЕЙ. Ку лайăх.
АШШĔ. Шанăç ӳснĕ Пек.
АНДРЕЙ. Шел ăна.
АШШĔ. Çапла, çирĕмре кăна вĕт. Каçар, ывăлăм, каçар, упраймарăм эп сана, ăс параймарăм. Ху та йышăнмарăн. Айăплине халь тин шырани усси çук, турă курать, вăл

айăплатăр. Каçарма юрăхлине каçартăр, каçару çук пулсан вара... Эпир унăн ирĕкĕнче.
АНДРЕЙ. Вăл сирĕн пĕртен-пĕр ывăл пулнă-и? Сирĕн тек ача çук-и?
АШШĔ. Никам та çук ман тек, хăр тăлăх, пĕр-пĕччен. Чуна йăпатакан та вĕлле хурчĕсем анчах.
АНДРЕЙ. Ма тăлăх? Вăл вилмен-çке.
АШШĔ. Халь вăл манран вуçех писет. Кунта эпир унпа çавăн пек, ăнлантарса та пĕтереймӗн. Çапах та чĕре ыратать мануншăн. Мĕнле пулсан та, ывăл-çке.
АНДРЕЙ. Мăшăрăр вара?
АШШĔ. Кам?
АНДРЕЙ. Арăмăр.
АШШĔ. Арăм мăшăр вырăнĕнче пулас темерĕ Ман. Мăшăр тени вăл упăшкипе пĕр çăвартан пурăнать, эпир вара...Вăл, ав, ялта халь ĕçкĕпе супать, эпĕ кунта... Марк вара... Çемье тек çук. Çук, кафене ăнсăртран пырса кĕнĕ çав ача айăплă мар, эпир, эпир амăшĕпе. Пӳтсĕр ачасемпе те пире пулах çыхланчĕ. Вун тăваттăрах  ача шутĕнчен тухрĕ те, писрĕ çемьерен. Малтан ĕçме, туртма  пуçларĕ, унтан çапăçма, кайран вара... Ача чунĕ Вĕт вăл ачаш, кашни сăмаха çывăха илет. Эпир ăна мĕн илтсен те чăтатпăр, пирĕн чун хытнă, ачан вара... Ăна амантма нумай кирлĕ-и? Пĕлетĕп, амăшĕ çав сăмахсене мана тавăрас тесе калатчĕ, эп иртнине манманнипе. Çав чечексене те вĕлле хурчĕсем валли кăна мар акса ӳстернипе. Вара пĕчĕккĕн-пĕчĕккĕн уйрăлсах кайрăмăр. Вăл Маркпа ялта пурăнатчĕ, эпĕ кунта. Малтанласа таçтан пĕрре килкелесе каятчĕ, кайран пач килми пулчĕ. Хам яла каяймастăп, вĕллесене пăрахса хăвараймастăн-çке. Шпанасем эп пăрăнасса кăна кĕтсе тăраççĕ. Хĕлле, паллах, ялта та пурăнма пулатчĕ, анчах чун туртмасчĕ ĕнтĕ. Юратăва курайманлăхпа ылмаштарма ниме те тăмасть иккен. Халь ак иксĕмĕрĕн çул çине хĕрес юпа тухса ларнăпа тан.
АНДРЕЙ. Хĕрес?
АШШĔ. Çапла, хĕрес. Пурнăça икĕ пая пайлакан хĕрес. Паллах çав хĕресе çурăм çине хурса малалла талпăнма та пулĕ. Анчах хĕресĕ ытла йывăр-çке.

АНДРЕЙ. Ун йыварӑшӗ Хамӑр айӑпа кура. Айӑплӑ тӑк – йӑт та ут такӑнса ӳкиччен. Пирӗншӗн ӑна тепри йӑтас çук.
АШШӖ. Çапла-çапла, ман шухӑшах калан. Çулпа Маркпа танах пек эс, ӑспа вара... Çав пӳтсӗрсемпе çыхланса кайиччен сан пеккипе юлташланасчӗ унӑн. Ма эс кӑшт маларх килмерӗн-ха, паллаштараттӑм иксӗре. Тен вӑл та улшӑннӑ пулӗччӗ. Çутӑ, çутӑ çитмен ӑна, аякри çутӑ ун еннелле çеç ӑнтӑлма. Кашни çыннах кирлӗ-çке вӑл. Вӑл пулмасан пурӑнас та килмест. Марина патне çӳрет тенине илтсен, вӑл уншӑн çав çутӑ вырӑнне пулӗ терӗм. Лайӑх хӗр, хама тьа килӗшет. Авланӗ те улшӑнӗ терӗм. Марина унран ача кӗтет текен сасӑ тухсан, савӑнсах кайрӑм , ак тинех тесе. Марк вара ун патне чечек çыххи йӑтса каяс чух, çӗçӗпе... Пуçа та шӑнӑçмать вӗт ку. Ир савӑнтӑм эп. Халь ак пӗччен.
АНДРЕЙ. Эсир йӑнӑшатӑр, пӗччен мар. Этем çӗр çинче пурӑннӑ чух пӗччен мар. Ку лӑплантарать, эп хамран илсе калатӑп. Хӑш чухне пурӑнас та килмест пек, анчах теприне куратӑн та, чун лӑпланать.
АШШӖ. Ӑçта-ши вӑл тепри, тӗнчен хӑш кӗтессинче-ши? Килсе кӗресчӗ ун, ак, Эсӗ килсе кӗнӗ пек.
АНДРЕЙ. Çук, ман пек килсе кӗме кирлӗ мар.
АШШӖ. Килмест вӑл, çук вӑл, маншӑн çук. Ку – суран, йывӑр суран, нихӑçан тӳрленменни. Ку манӑн айӑп. Айӑп тсен те айӑп мар. Тен йӑнӑш? Анчах та йӑнӑш тӑвас темесӗр те пулать-çке, пӗлмесӗр, ӑнсӑртран. Куншӑн çынна айӑпламалла-и-ха?
АНДРЕЙ. Пӗлмесӗп, тен... Кунта тем пытаннӑ, кунта... Тепӗр тесен веç паллӑ пек, анчах... Ьӗтре куç умӗнче. Тӗтре леш енче çутӑ та йӑлтӑртатать пек. Анчах те çутӑ вӑл, те усал куçа пӑтраштарни. Калӑр-ха, çав ачана, ӑна пула ывӑлӑр çӗçӗпе... Ӑна, паллах, следовательсем шыраççӗ, шырасан-шырасан тупаççех. Мӗн тенӗ Пулӑттӑр эсир ӑна, мӗн тунӑ пулӑттӑр?
АШШӖ. Пӗлместӗп.
АНДРЕЙ. Мӗнле – пӗлместӗр? Вӑл айӑплӑ-çке, эппин ӑна...
АШШӖ. Каçар та кун пирки хам ывӑл пирки çапла каланӑшӑн, анчах тарӑхнӑ чух эп ӑшра пулин те вӑл вилсе выртасчӗ Тени

пулнă. Кала-ха, эс ак хăвăн аннӳ çине е аçу çине алă çĕклени пулнă-и?
АНДРЕЙ. Çук, мĕн эсир!
АШШĔ. Вăт вĕт. Вăл вара...
АНДРЕЙ. Эп ун пурнăçĕпе пурăнман, мана юратнă, ман пурте пулнă. Умра та çа-çутахчĕ. Анчах хам çинчен мар манăн сăмах. Эп кунта килтĕм... Эпĕ каласшăнччĕ... (Кантăкран пăхса.) Мĕн чух чечек кунта, ырлăх, апла пулин те... Эсир чечексем ӳстерме юратни сисĕнет.
АШШĔ *(сулăнса кайса).* Чим-ха , чĕре чиксе кайрĕ.
АНДРЕЙ. Сире пулăшмалла-и?
АНДРЕЙ. Çук, часах иртет. Каçар та, мĕн ятлă эсĕ, ывăлăм?
АНДРЕЙ. Эпĕ? Ма ун пек ыйтатăр?
АШШĔ. Çынна «эй» тесе чĕнес килмест-çке.
АНДРЕЙ. Андрей.
АШШĔ. Тезка, эппин. Эп мĕн тесшĕнччĕ. Ăнсăртран килсе кĕтĕн эс çав каç. Паян та ак... Пĕлетĕн-и, эп çав каçранпах сан çинчен шутларăм, кĕтрĕм те сана. Килет темен. Эс мана тĕлĕнтертĕн. Капла пăхсан кунта ним тĕлĕнмелли те çук пек, анчах чĕре... Вăл...
АНДРЕЙ. Туять-и?
АШШĔ. Çук ку туйни мар пуль, урăххи пуль. Мĕнне эп хам та ăнланса илеймерĕм-ха. Ак, эс тата ман ывăл – икĕ çын, анчах çав икĕ çын... Тен сана мĕн те пулин кирлĕ? Тен укçа? Тен машина вăрманна кăларса пĕтермен пулсан? Эп пулăшатăп. Мана итлекенсем нумай, эп хам та çынсене самаях пулăшатăп.
АНДРЕЙ. Çук, мана сиртен нимĕн те кирлĕ мар! Эсир сăмах тавра çӳретĕр, сирĕн мана калас сăмах кун çинчен мар. Ан ирĕксĕрлĕр хăвăра, калăр тӳррипе. Тӳррине илтнине нимĕн те çитмест. Тепĕр тесен, эп хам та çавăншăнах килтĕм. Вăрттăнлăх нимĕн те ан юлтăр. Калăр, кайран эп хамăн сăмаха калăп.
АШШĔ. Тĕрĕссипе манăн сăмах та çук, эп... *(Андрей умне чĕркуçленсе ларса ыталаса илет.)* Тавтапуç сана.
АНДРЕЙ. Тавтапуç?
АШШĔ. Тавтапуç. Эс мана савăнтартăн.
АНДРЕЙ. Эп тем сире ăнланаймарăм.

АШШĔ. Паллах ку ăнланмалла мар илтĕнет паянхи кун. Ывăл лере вилĕмпе кĕрешет, эп вара савăнатăп. Ан айăпла мана, ку вăл тахçантанпах ăшша туйманнипе. Чуна ăшă санпа. Пулать-çке çавăн пекки, çынна пĕрре курсах иленетĕн те, унран хăпас килмест, куç умĕнчен те вĕçертес килмест. Самантлăха уйрăлсан та ăна хыпса-çунса кĕтетĕн. Ман кун пекки пулман. Авланиччен пулнă, кайран вара... Ку эпир пĕр-пĕрне сăмахсăр ăналаннипе. Чун кĕтнĕ, тунсăхланă сан пеккишĕн. Ак мĔншĕн савăнать манăн чĕре. Халь эсĕ, ак, каясшăн, эп вара... Мĕнех, санăн хăвăн пурнăç, хăвăн çемйе Çемйеллĕ-и эс?

АНДРЕЙ. Çук, ĕлкĕреймерĕм-ха.

АШШĔ. Ĕлкĕрĕн-ха. Тулькка юратнине çеç качча ил. Юратманни хыççăн, хăй илĕртет пулсан та, утăм та ан ту. Вĕрентет тесе ан кала, хам пурнăça аса илсе калатăп. Ну, ĕçне вĕçлерĕн-и вара?

АНДРЕЙ. Ĕçе?

АШШĔ. Эс вăрман пирки килнĕччĕ терĕн пулас.

АНДРЕЙ. А-а-а, вĕçлерĕм.

АШШĔ. Шел. Çук, кăна эп сан пирки мар, эп саншăн хĕпĕртетĕп, ĕçӳ ăннă. Малашне те ăнсах пытăр. Эп мĕн теп... Пĕлместĕп, мĕнле пурăнăп эп малашне: çурт, выльăхсем, утар... Халь эс васкан пулсан... Кунта çывăхрах аслă çул. Ку тăрăха тата килсен вăрман пирки е иртсе-каяс тăвас пулсан та, кĕрсе тухмасăр ан кай тесшĕнччĕ эпĕ сана.

АНДРЕЙ. Васкани-мĕнĕ... Çапла, ман каймалла. Ман тепĕр ĕç пур, юлашки, анчах... Унччен сире мĕнпе те пулин пулăшма пултарап пулсан...

АШШĔ (куççульне шăлса). Çук, ман çине ан пăх, хĕпĕртенипе эп. Ашшĕпе ывăлĕ çакăн пек пулмалла та пĕр-пĕринпе. Çакă çитмесчĕ те пире. Мана тата мĕн кирлĕ? Нимĕн те. Хăвна тепре ыталаса илме çеç ирĕк пар. (Андрее ыталаса илет.)

*Марина кĕрет, вăл аллине гитара тытнă.*

МАРИНА. Энтри тете, эпĕ...

АШШĔ. Марина... Ак манăн пурнăçри тепĕр хĕвел. Паллашăр, ку ак...

АНДРЕЙ. Эпир...
МАРИНА *(Андрей енне алă тăсса).* Марина.
АНДРЕЙ *(Маринана алă парса).* Андрей.
МАРИНА *(гитарине ашшĕне парса).* Ку Маркăн, вăл ăна кафене хăварнăччĕ.
АШШĔ. Илсе килемлле марччĕ.
МАРИНА. Кафере çухалма пултарать.
АШШĔ. Тепĕр тесен... *(Андрее.)* Ывăлăм, эс унпа выляма пĕлетĕн-и? Выля-ха чун канмалăх?
АНДРЕЙ. Халĕ-и? Паянхи кун-и?
АШШĔ *(гитарине хурса).* Юрĕ-çке, эсир пур чухне капал та чун юрлать. Марина, чей ĕçетпĕр. Эпĕ çиччас çĕнĕ пыл илсе кĕретĕп. *(Савăт илсе тухса каять.)*
АНДРЕЙ. Ма килтĕн эс?
МАРИНА. Сан кунтан часрах каймалла. Кафене милицисем пычĕç, вĕсем тĕпчеççĕ. Мана ыйтса тĕпчерĕç, халь ыттисене чĕнсе кĕртрĕç. Вĕсем çак самантрах кунта та килсе кĕме пултараççĕ.
АНДРЕЙ. Эсĕ мана каллех тарма хушатăн-и?
МАРИНА. Тарма-и е... Пĕлместĕп эпĕ, ман сана пулăшас килет. Паллах тарса пурăнни те çăлăнăç мар, анчах вилсе выртиччен... Следовательсенчен ытларах мана Марк юлташĕсем хăратаççĕ. Вĕсем сана лешсенчен маларах тупса вĕлерме калаçса татăлнă тет. Вĕсен аллинчен виличчен... Сан каймалла, пĕлместĕп ăçтине, анчах та аякка. Ман вара...
АНДРЕЙ. Эпир халь çыхăннă ку инкекпе, иккĕн икĕ енне кайма пултараймастпăр.
МАРИНА. Пултаратпăр. Мана пурте паллаççĕ, асна вара никам та. Вăл вилнĕ е вилмен – вĕсем сана шыраççĕ. Манпа юнашар эс вĕсен аллине хăвăрт лекен.
АНДРЕЙ. Ăçта лексен те маншăн халĕ пурпĕрех.
МАРИНА. Çук, пурпĕр мар. Хăвшăн пурпĕр пулĕ те... Кай, тархасшăн.
АНДРЕЙ. Манăн халь кунта пулмалла. Ку манăн тивĕç.
МАРИНА. Кам умĕнче? Мĕн, вăл мĕнлине ăнланакан çынсем пит хуйхăраççĕ Тетне уншăн? Çав кирлĕ, теççĕ. Хăйĕн пуçне хăй çиет, теççĕ. Юлташĕсем тен кулянам пекки тăваççĕ. Вăл вĕсене тăрантарса-кўптерсе пурăннă та-ха ашшĕне çаратса,

пĕчĕк коммерсантсене хăратса, иртен-çӳрен машинасене чарса. Хăйсем тĕллĕн лешсем ун пеккине тен пултараймаççĕ те. Ашшĕпе амăшĕ хуйхăраç, паллах, урăх никам та. Çапла, ку хăрушла илтĕнет, анчах çынсен асĕнче урăхла аса юлман вăл. Мĕн тăвăн, ыр тунинчен усаллине çынсем ытларах асра тытаççĕ.
АНДРЕЙ. Эс вара? Эс те вĕсем пекех шутлатăн-и? Саншăн та вăл...
МАРИНА. Чарăн!
АНДРЕЙ. Каçар. Кам пулнă вăл ача?
МАРИНА. Марк, утарçă ывăлĕ.
АНДРЕЙ. Кăна пĕлетĕп эпĕ. Саншăн, саншăн кам пулнă? Ма вăл сана кафере... Ахальтен мар вĕт.
МАРИНА. Ан ыйт нимĕн те.
АНДРЕЙ. Ма ыйтас мар-ха?
МАРИНА. Ман хурав çук. Турăçăм, ма çуратса янă-ши мана çак асапа курма. Сана тата мĕн хĕтĕртрĕ çĕр варринче çак вырăна анса юлма? Каясчĕ Автобуспа çитес тенĕ çĕре.
АНДРЕЙ. Тен ку шăпа? Тен пирĕн шăп çавăн чух виççĕмĕрĕн тĕл пулмалла пулнă, ун вара... Эп нихăçан та шутламанччĕ çынна çĕçĕпе...
МАРИНА. Эс аллуна çĕçĕ тытман.
АНДРЕЙ. Кăна çынсем курман. Вĕсем сана ĕненмессе те пултараççĕ. Никам та шутласамсть çын хăйне хăй чикет тесе.
МАРИНА. Вăл ăнсăртран.
АНДРЕЙ. Ăнсăртран-и, ăнсăртран мар-и – халь уншăн пурпĕр мар-и? *(Пауза.)* Эс ун патне кайса килтĕн-и?
МАРИНА. Çапла, ĕнер, ачнах мана кĕртмерĕç, тăна кĕмен-ха терĕç.
АНДРЕЙ. Çынсем ман пирки мĕн калаçаççĕ?
МАРИНА. Пĕлмеççĕ.
АНДРЕЙ. Эс вара каласа памарăн-и? Сана никам та тĕпчемерĕ-и?
МАРИНА. Тĕпчерĕç. Каласа патăм. Сăнна ыйтрĕç. Палламан çын терĕм. Кăтра çӳçлĕ, хĕсĕк куçлă, пĕр вăтăртан иртнĕскерччĕ, терĕм.
АНДРЕЙ. Ма, ма ман сăна палăртмарăн?

МАРИНА. Кай кунтан часрах? Вĕсем ман пата тата та килме пултараççĕ, тен аяккинчен сăнаççĕ те. Милицисем сăнамасан, юлташĕсем сăнама пултараççĕ. Эс кунти çын мар. Мансăр пуçне никам курман. Марк юлташĕсем курсан та, аякран кăна, тĕттĕмре сăнна пит уйăрса та юлайман пуль. Кай. Таврăнмалла марччĕ сан. Ма хăвна хăрушлăха чикетĕн?
АНДРЕЙ. Сăлтавĕ пулчĕ таврăнма.
МАРИНА. Мĕнле сăлтав тата?
АНДРЕЙ. Манăн ăна пĕр ыйту памалла. Пĕр ыйту канăçсăрлантарать мана.
МАРИНА. Мĕнле ыйту?
АНДРЕЙ. Халлĕхе хам та пĕлместĕп, халлĕхе иккĕленӳллĕ. Кайран каласа паратăп. Юрĕ, мĕнле пулсан та халĕ эпĕ шăпа аллинче.
МАРИНА. Энтри тетене мĕн терĕн эс?
АНДРЕЙ. Нимĕн те.
МАРИНА. Вăл сана ывăлăм терĕ.
АНДРЕЙ. Эпĕ икĕ питлĕ çын мар. Эпĕ ăна пĕтĕмпех каласа пама килтĕм, анчах та вăл... Вăл çавăн пек çын... Вăл халĕ питĕ Аманса юлма пултарать. Тен ыран?
МАРИНА. Кунтах юлсан саншăн ыранхи кун пулмасса та пултарать.
АНДРЕЙ. Юрĕ, каласа паратăп. Кĕтĕр те, ак, ку ĕç вĕçленĕ. Апла-и, капла-и – паян вĕçленĕ.
МАРИНА *(йĕрсе).* Çук, иккĕллĕ шухăш пуçăнта ан тыт, йăлăнатăп.
АНДРЕЙ. Ан макăр, вăл кĕçех кĕрет. Ма мана хӳтĕлен-ши эс? Вăл пĕлмест тейĕпĕр, эсĕ веçех пĕлетĕн-çке.
МАРИНА. Ан айăпла мана. Ман пурнăç çав каç хыççăн веçех пăтранчĕ. Турăçăм, кама çаврăнтăм-ши эп? Анчах пулăшас тени вăл çылăх туни мар-çке. Тĕрĕссипе тен ман халь теприпе юнашар пулмалла, анчах эс таврнтăн та...
АНДРЕЙ. Çапла, ман кунта килмелле пулман. Кунта та, кафене те. Эс следовательсем кафере юлчĕç терĕн-и? Çапла, вĕсем кунта килме пултараççĕ, килччĕрех. Килччĕр те вара...
АШШĔ *(кĕрсе).* Вĕллесене те темиçе кун пăхман. Мĕн чухлĕ ĕç, ахаль ларма та вăхăт çук, эп вара... Мĕнле вăй çитерес.

МАРИНА. Тен эпĕ пулăшма пултарап?

АНДРЕЙ. Эс кин пулмалли çынччĕ, халь вара... Эх, Марк, Марк, мĕн туса хутăн? Урнă çанталăкра хирĕçсе тухса кайрăн та... Мĕнле пурăнăпăр ĕнтĕ малашне?

АНДРЕЙ. Эсир камран ыйтатăр?

АШШĔ. Санран, унран, Турăран. Илтмест вăл мана. Çав териех çылăхлă-ши эп? Никама та усал тăвас темерĕм-çке çак пурнăçра. Сăлтавĕ Кăмăл ырă пулнинче-ши, йăваш пулнинче-ши? Вула-ха, хĕрĕм, çак кĕнекене, тен çăмăлрах пулĕ. *(Библи илсе парать.)*

МАРИНА *(Библине илсе).* Хăш тĕле?

АНДРЕЙ. Хăть те хăш тĕле уç та вула. Унта пĕтĕмпех чăн.

МАРИНА *(вулать).* Тӳрĕ ĕç туса пыман çын нихăшĕ Те турăран мар, тăванне юратман çын та çавах. Эсир пуçламăшĕнче илтнĕ Хыпар пире пĕр-пĕрне юратма хушать. Каин пек пулма хушмасть: вăл шуйттанран, вăл хăй тăванне вĕлернĕ. *(Вулама чарăнать.)* Çук, ку тĕрĕс мар, ку тĕрĕс мар! *(Библине хурать.)*

АНДРЕЙ (Библине илсе малалла вулама тытăнать). Эй, тăвансем, тĕнче сре кураймасть пулсан,  эсир ан тĕлĕнĕр. Эпир тăванăмăрсене юрататпăр, çавăнпа эпир вилĕмрен чĕрĕлĕхе куçнă, ăна пĕлсе тăратпăр: тăванне юратман çын вилĕм аллинче тăрать. Тăванне кураймасăр тăракан кирек кам та çын вĕлерекен пулать, çын вĕлерекенĕн нихăшийĕн ăшĕнче те ĕмĕрлĕх чĕрĕлĕх çуккине эсир пĕлетĕр. Çăлакан юратнине эпир Вăл пирĕншĕн Хăй чунне панинчен пĕлтĕмĕр: пирĕн те ĕнтĕ тăванăмăрсемшĕн хамăр чунăмăрсене парас пулать. *(«Новый завет», 1-ое послание апостола Иоанна, гл73, стихи 10-20)*

МАРИНА *(кантăкран пăхса).* Кунталла машина килет. Андрей, килеççĕ.

АНДРЕЙ. Милици машини-и?

АШШĔ. Татах çав шпанасем. Тата мĕн кирлĕ ĕнтĕ вĕсене? Ывăла туртса илчĕç, машинана илсе тухса кайрĕç, миçе вĕлле тиесе кайрĕç...

МАРИНА. Мĕн пулĕ ĕнтĕ халь?

АНДРЕЙ. Килччĕр, ан хăра.

МАРИНА. Ма кунта килеççĕ-ха вĕсем? Эп кунталла утнине курчĕç-ши? Е Марк больницăра... Çук, çук. *(Ашшĕ умне*

*чĕркуçленет.)* Энтри тете, каçар пире. Хăтар ăна эс вĕсенчен. Андрей айăплă мар, вăл çĕçĕ тытман. Ман айăппа пулчĕ Ку пĕтĕмпех. Мана тĕп ту, ăна çăл!
АНДРЕЙ. Марина , мĕн калаçатăн? Çĕклен, тăванăм, веçех йĕркеллĕ. Е тăнламарăн-и? «Тăванăмăрсемшĕн чунăмăрсене парас пулть.»
АШШĔ *(Андрее).* Халех мачча çине хăпар. Унта пыл уçламалли катка ларать, пытан çавăн хыçне.
АНДРЕЙ. Çук.
АШШĔ. Сан турткаланса тăма вăхăт çук.
АНДРЕЙ. Ма пытанмалла? Халь эсир пĕтĕмпех пĕлетĕр-çке.
АШШĔ. Кун çинчен кайран калаçăпăр. Хăпрарса кай! *(Андрее чышса кăларса ярать.)*

***4 картина.** Çавăнтах, кăшт вăхăт иртсен. Ашшĕ кантăк умĕнче тăрать. Маринапа Андрей кĕреççĕ.*

АШШĔ. Хĕвел анать, каллех çанталăк каç сĕмлĕхне путать. Юратмап тĕттĕмлĕхе, пуçа темле шухăш та пырса кĕрет. Кăнтăрла хăть ĕçпе йăпанан, каçхине вара... Ыйхă тарнипе пушшех те. Мĕн чух ыйту, пĕрин çине те хурав çук. Ватăлтăм пулас, ăнланмии пултăм пурнăça. Пурнăça çеç те мар, хама хам та ăнланми пултăм. Пĕтĕмпех тĕтрелле.
АНДРЕЙ.Халь веçех уçăмлă, сирĕлчĕ тĕтре.
АШШĔ. Тепĕр чухне тĕтĕре ăшĕнчен тухас та килмест. Ĕмĕр тĕтре ăшĕнче пурăннă хыççăн тӳпе янкăр уçăлса кайтăр-ха, савăннипе ухмаха ерĕн. Ĕненмĕн-ха пулма пултараймасть тесе. Телей те çавах. Ĕмĕр телейсĕр пул та, кайран сасартăк пат! Сан пуçу çине вăл йăтăнса ансан...
АНДРЕЙ. Мĕнле телей?
АШШĔ. Мĕн?
АНДРЕЙ. Мĕнле телей халь тин?
АШШĔ. Ах, телей.... Эп мĕн-ха... Калатăв вĕт пăтрашăнтăм тесе. Каç ирттĕр-ха, вара... *(Эрех ярса.)* Ирччен ак юлнă-ха кунта. Йывăр чух пулăшать, шуйттан илесшĕ. *(Ĕçсе ярать.)*
АНДРЕЙ. Кăлăхах эсир.

АШШĔ. Çапла, шуйттана йыхăриччен... *(Библи илсе.)* Ак ăсăлă кĕнеке, тытса вуласчĕ Те вĕт, ӳркенетпĕр, ăнланмастпăр тетпĕр.

Ăнланмалла марри унта нимĕн те çук пулсан та. Веçех паллă-çке. Ухмах этем, çутта тухасшăн мар. Тĕтре ăшĕнчен тухсан те çĕтсе каясран хăрать*. (Маринана.)* Вула-ха, хĕрĕм, татах вула.

АНДРЕЙ. Халь тин унта хăть вула, хăть ан вула. Халь тин каялла ним те тавăраймăн.

АШШĔ. Çапла, тен ман вуланин усси çук, ман вилмелле кăна, анчах та сирĕн... Сирĕн пурăнмалла-çке-ха. Эсир çамрăк, сирĕн малашĕ, телейĕ те, юратăвĕ те, ачи-пăчисем те - веçех малашлăхра. Кайран, ачасем ӳссе çитсен çе- «эй, юрĕ-çке» теме пулать. Вăй тапса тăнă чухне вара...

АНДРЕЙ. Сирĕн те вăй чакса ларман-ха. Мĕн кĕтетĕр эсир? Эпĕ кунтах-çке, çĕçĕ те юнашар. Сăмах малалла тăсиччен тытăр та ăна... Кунта пуçланнă – кунтах вĕçлентĕр. Урăхла канăç пулмĕ Халь. Турă кĕнеки вуличчен... Турă çăлаяс çук. Вуланин çеç усси сахал, мĕн вуланине ăша илмесен... Çитес çĕре эп çитрĕм, ку çул вĕçĕ.

АШШĔ. Çул вĕçĕ, тетĕн? Ытла хăвăрт утса тухмарăн-и эсĕ ăна? Е çулу аслă пулнипе мĕнле вĕçне çитсе ӳкнине те сисмерĕм тесшĕн-и?

АНДРЕЙ. Ман çул аслă пулман, тумхахлă, вăрман çулĕ пек.

АШШĔ. Тумхахлă?

АНДРЕЙ. Яка пулман.

АШШĔ. Çук, çул вĕçĕ мар ку санăн, çул юппи кăна. Çул юппинче вара кăшт чарăнса пуçа ĕçлеттерсе илсессĕн те юрать малалла хăш çулĕпе каймалла-ха тесе.

АНДРЕЙ. Хăш çулĕпе кайсассăн та, маншăн халь пурпĕрех.

АШШĔ. Ху суйласа илни.

АНДРЕЙ. Çук, Турă çырни.

АШШĔ. Апла çурман вăл сан пирки, телей курмалла çырнă. Малтан тен инкекне те, кайран вара телей кăна. Турă пĕрин пуçĕ çине кăна çавăн чухлĕ инкек яма пултараймасть, ун пек тĕрĕс мар пулать. Çыннăн теле те курмаллах.

АНДРЕЙ. Суя телей-и? Ма кирлĕ вăл мана? Ун пек телейпе эп виççĕренпех чыхăннă. Ман пурте пулнă, мана юратнă, сив

çурçĕрте те мана ăшă пулнă. Анчах вăл ăшă урăхларахскерччĕ. Ӳт тăрăх тар юхать, чуна вара сивĕ. Юратăвĕ те ăшăтмасть, мĕншĕн тесен чунтанах мар, ирĕксĕртен тухаканскер. Ача чухне, паллах, кăна туймастăн, ӳссе çитеспе вара... Суяпа чăнлăха уйăрма вĕренсе çитсен, хăйсем пекех суя юрату шантарса никам чунне хуçмасăр тухмалла та каймалла.

АШШĔ. Çывăх çын тухса кайсан чун епле хуçăлмĕ-ха?

АНДРЕЙ. Суя юратупа пурăнма тек хал çитмест пулсан, каймасăр епле чăтăн?

АШШĔ. Яланлăхăх-и?

АНДРЕЙ. Яланлăхах. Е таврăнас пулсан та, таврăнакан пач урăх пулĕ. Урăх çын пулса таврăнас тсенссĕн, каймаллах-çке. Каймасăр таврăнма май çук. ЭП тĕлĕнетĕп, мĕнле сирĕн чăтăмлăх çитет? Ма нимĕн те тусмастăр? Тытăр çĕçĕ! *(Çĕçĕ илсе ашшĕ енне тăсать.)*

АШШĔ. Çук*! (Çĕççине туртса илет те ывăтса ярать, Андрее хулпуççийĕнчен тытса силлет.)* Мĕн туса хутăн эсĕ?! Мĕн туса хутăн?! Çакна кĕтнĕччĕ-и эпĕ? Пĕтертĕн эс пурне те, çутă ĕмĕте татрăн. Çирĕмре кăна вĕт ху, çирĕмре кăна! *(Сасартăк ыталаса илет, кайран чышса ярать.)* Кай, эп сана каçаратăп, ирĕке яратăп.

АНДРЕЙ *(тĕлĕнсе тата кураймасăр).* Суя ку! Суя! Суя!.. Эп сире кураймастăп, эп сире ылханатăп! Эсир ăна юратман. Çуратасса çуратнă, юратăвне вара паман. Çавна пулах вăл сиртен писнĕ, çавна пулах вăл çав ачасемпе туслашнă, çавна пулах вăл кафере Маринана... *(Маринана ыталаса.)* Çук, эп сана айăпламастăп, сан пирки урăх сăмах. Ун чунĕ Тулса килнĕ. Капрланса килнĕ çиллине тулалла кăларса яма ăна пĕр пĕчĕк сăлтав кирлĕ пулнă. Шăпах ун тĕлне эсĕ лекнĕ. Сан айăп çук. Тен вăл çав самантра пурăнас та темен. *(Ашшĕне.)* Мана вара хӳтĕлеме кирлĕ мар, хӳтĕ шырама килмен эпĕ кунта. Кирлĕ мар мана эсир хӳтĕлени! Эп хам пурнăçпа хам хуçа. Пурăн лăпкăн. Сыв пул, Марина.

МАРИНА. Ан кай, Андрюша, ан кай! Ямастăп эп сана. Каяс пулсассăн мана та пĕрле илсе кай.

АНДРЕЙ. Сан кунта пулмалла, сан кĕтмелле. Эс сăмах патăн. Чипер! *(Тухса каять.)*

МАРИНА. Андрей!!!
АШШĔ. Ан яр ăна, чуп хыçалтан! Çук, тăхта. Сан кассунта мĕн чухлĕ укçа пухăнчĕ паян? Пар мĕнпурне.
МАРИНА. Çук ман нимĕн те, мана паян ĕçрен кăларса ячĕç.
АШШĔ. Ман хамăн банкра пур, анчах вăл халĕ хупă. Вĕсем укçине çийĕнчех ыйтаç.
МАРИНА. Камсем? Ма кирлĕ укçа?
АШШĔ. Кайран, кайран каласа парăп. Пурпĕрех тупатăп, мĕн чух ыйтсассăн та тупатăп. Эп яла каятăп. Эс вара чуп, тавăр ăна. Ирччен кĕттĕр. Ирпе веçех йĕркеленет. Анчах кунта ан килĕр, кунта хăрушă. Пĕр каç вăрман айĕнче те каçма пулать. Васкар. *(Тухса каяççĕ.)*

***5 картина**. Çавăнтах, темиçе кун иртсен. Марина пукан çинче пуçне хупласа ларать. Шăппăн Андрей кĕрет.*

АНДРЕЙ. Марина!
МАРИНА. Андрей! *(Пĕр-пĕрне ыталаççĕ.)* Тавах турра, сывă. Сана милицирен кăларса ячĕç-и?
АНДРЕЙ. Аха, судчен тесе.
МАРИНА. Эп сана халех ямаççĕ Пуль тесе. Энтри тетерен сан пирки ыйтса пĕлесшĕнччĕ, вăл хăй те çук. Юрĕ-çке, эс ирĕкре, çавă паха. Юрать-ха шпанасем сисмен сана кăларинине, атту пулсан... Эс те Энтри тетене курасшăнччĕ-и?
АНДРЕЙ. Пĕлместĕп. Эпĕ халь ăçта кайса мĕн тумаллине нимĕн те пĕлместĕп. Пуç пăтранать. Ман пĕччен пулмалла, ман шутламалла, ман...
МАРИНА. Пĕччен? Ун пек юрать-и вара? Халь тин сан пĕччен пулма юрать-и вара? Ма хăрататăн эс мана? Эс çавăн пек пăхан...
АНДРЕЙ. Çапла, халь тин эп сансăр чăн та пултараймастăп пулĕ çăлăнма. Çук, мана йĕрлекенсенчен мар, хамран хам. Мана хăрушă. Çăлсам мана.
МАРИНА. Турă сана çăлать. Турра хăвăн ăшна илме тăрăш та... Вăл каçарать.
АНДРЕЙ. Çылăха та-и?

МАРИНА. Эс ыйтса пăх.
АНДРЕЙ. Епле-ха ыйтăн? Ыйтсан тен вăл каçарĕ те, анчах та хам вара... Эп хама хам каçарма пултараятăп-и? Çук вĕт, çук. Йывăр хĕрес халь тин ниепле те çăмăлланмĕ. Пĕр çул пур – тата та ытларах вăй пухса çав хĕреспех утăм хыççăн утăм тăвасси. Вăй вара – санра. Сансăр эпĕ хама пайăн-пайăн саланса каясла туятăп. Ав еплерех айван эп. Хама ылханма тивĕçлĕ çынран вăй парасса кĕтетĕп.
МАРИНА. Эп хам та вĕт санран халь вăй кĕтетĕп. Эс таврăнман пулсан, тен эп те хама халь хальччен...
АНДРЕЙ. Эп таврăнмасса та пултарнă вĕт, пат çухалма эс хушнă пек.
МАРИНА. Çук. Тепри пултарĕ, эсĕ - çук.
АНДРЕЙ. Ма ун пек шутлатăн? Эс мана ним чухлĕ те пĕлместĕн-çке.
МАРИНА. Хама çителĕклĕ чухлĕ пĕлтĕм пулĕ ĕнтĕ. Эс çав каç кафене пырса кĕрсенех... Кункаçа унта нумай çын кĕрсе тухать. Иртен-çӳрен водительсем яланах чарăнаççĕ. Вĕсем хушшинче тĕрлисем пулаççĕ, куç хывма пăхакансем те, анчах та сан пекки... Ун чухне сан вырăнта тепри пулнă пулсан, эпĕ ăна кĕртместĕмччĕ те, сана вара... Пулать-çке çавăн пек самант, чĕрене хушаймăн, теççĕ. Шел, кĕртмелле марччĕ Ман сана, хăвăншăнах лайăх пулатчĕ. Халь вара...
АНДРЕЙ. Кĕртмен пулсан эп сана тен нихçан та тĕл пулмастăмччĕ. Эпир кунта, Сенгилее, кукамая пытарма килнĕччĕ. Мĕнле ӳкĕтлерĕç, мĕнле хăварасшăн марччĕ Мана аттепе анне. Аттепе анне... Пĕлетĕн-и, ман атте те пур, анне те, анчах та мана çуратакансем мар, аннен аппăшĕпе йысна кăна.  Анне вилсен вĕсем мана усрава илнĕ, виççĕренпех пăхса ӳстернĕ. Çавăнпа вĕсем маншăн аттепе анне вырăнĕнчех. Чĕнме те эпĕ вĕсене çаплах чĕнетĕп. Вĕсем лайăх çынсем, юратаççĕ те мана. Анчах та эпĕ вĕсем кĕтнĕ чухлĕ юратаймасран хăратăп. Ăнсăртран пĕр пĕчĕк сăлтава пула шутламасăр мĕн те пулин персе ярăса, вĕсен чунне ĕмĕрлĕхех амантса хăварасран хăратăп. Чун тыткăнраччĕ Ман. Çавăнпа кукамай вилни те маншăн çăлăнăç пек пулчĕ. Вара ун çуртне хупас мар тесе, эп юлас терĕм. Юлашкинчен вĕсем килĕшрĕç. Çав кун эп вĕсене Мускава çити ăсатса

ятăм, самолет Норильска Мускавран вĕçет. Каялла таврăннă чухне вара...
МАРИНА. Эппин сан инкекӳ çинчен вĕсем пĕлмеççĕ Те?
АНДРЕЙ. Çук, ан пĕлччĕр те. Ку ытла хăрушă. Эп халĕ вĕсен куçĕнчен пăхма хал çитерейместĕп.
МАРИНА. Мĕнле пулсан та пурнăç лайăхран. Телей те пулатех. Антив вăл пурнăç вĕçĕнче çеç килтĕр, уншăн та пулин пурăнмалла. Эпир халь пĕрле-çке. Уйрăм, паллах, эп хам та сан пекех шутланă. Каферен тухсан вăрман хĕррипе пынă чухне ман хамăн та пуçра усал шухăш пулнă. Анчах ума эс пирĕшти евĕр тухса тăтăн та...
АНДРЕЙ. Мĕнле пирĕншти? Танлаштарусем те сан... Çылăхлă çын пирĕшти пулаймĕ.
МАРИНА. Турăшăн чăн та пулаймасть пуль те, анчах та маншăн... Турра çеç мар, мана та кирлĕ-çке-ха вăл, сана та, теприне те. Унсăрăн епле-ха усалран хăтăлса пĕтер?
АНДРЕЙ. Пĕчĕккĕ чухне мана ĕнентеретчĕç Турă кашни çын çинчен  веçех пĕлсе тăрать тесе. Унăн пысăк кĕнеке пур тет, унта вара веç çырса хунă тет çын çуралса мĕн виличчен унпа мĕн пулса иртессине. Пĕлетĕн-и, çав кĕнекере ман ят пачах та пулмалла пулман, çуралмалла пулман ман. Çуралнă пулсан та виççĕрех аннепе пĕрле вилмелле пулнă.
МАРИНА. Çук, Турă çынна ырă кăна тăвать.
АНДРЕЙ. Те ялан сив çӳрçĕрте пурăннăран, Сенгилейне килсен эп ялан вăрмана е уй-хире тухаттăм та, ку тăрăхри тавралăх мана çăтмахри пек туйăнатчĕ. Каяс килмесчĕ каялла. Кунта, утар çывăхĕнчи тавралăха курсан вара, куç умне Библи çинчи ӳкерчĕк тухса тăчĕ. Йĕри-таврa чечек, вĕлле хурчĕсем, кайăксем, пăрушки-путекки, чăх-чĕп, йытти-кушакĕ – пурте пĕрле, пурте хăйсене ирĕклĕн туяççĕ. Юнашарах çут кӳлĕ, çак вăрман. Пурте пур темелле, çапах та тем çитмест пек. Тен чĕрчунсем ăна туймаççĕ Те, вĕсемшĕн çакă тен çăтмах, анчах çынсем... Ытла телейсĕр-çке вĕсем. Эппин ку çăтмах мар. Тен çук та вăл çăтмах? Тен Турă та çук?
МАРИНА. Пур. Турă пур.
АНДРЕЙ. Енчен те Марк сывă юлсан, эп вăл пуррине ĕненнĕ пулăттăм. Эс каин çинчен вуланă чух...

МАРИНА. Çук, эс Каин мар, Марк та Каин мар. Çук ун пек çынсем çĕр çинче. Пăтрашăннă çынсем çеç пур: сан пеккисем, Марк пеккисем, ман пеккисем. Эпир пăтранчăк ăшĕнчен тухатпăрах. Çутă куратăп эпĕ хам умра. Вăл - эсĕ.
АНДРЕЙ. Эпĕ?
МАРИНА. Çиелтен пăхсан кăшт вараланнă пек курăнсан та, шалта, чун тĕпĕнче, эс пиĕншти. Енчен сана ман юрату çăлать пулсан...
АНДРЕЙ. Юрату? Эс чăнласах-и? Эсĕ мана халь мĕн кĕтнине пĕлетĕн-и?
МАРИНА. Пĕлетĕп.
АНДРЕЙ. Санăн шăпу йывăр пулать.
МАРИНА. Эп хам ăна суйласа илтĕм. Сив çил санăн ӳтне касать-и е шăрăх вăйсăр хăварать, иртни санăн чунна тыллать-и е умăнти çулу хăратать – эп пулăп юнашар, ĕмĕрлĕхех.
АНДРЕЙ. Пĕлетĕн-и, кунта килнĕ Чух эпĕ те сана аса илтĕм, сан çинчен шутларăм. Мĕнле-ха эп ăна çав инкекпе пĕччен пăрахса хăварăп, терĕм. Халĕ те урăх çĕрте тăрас чухне сан умăнта тăратăп, уйрăласран хăратăп. Çук, хамшăн мар, ытларах саншăн эп хăратăп. Эпин ку юрату?
МАРИНА. Юрату. Умри асап кунсем иртчĕр те, вара...
АНДРЕЙ. Ун чухне эпĕ сана кашникунах чечек çыххи парнелĕп. Эс çывăрса каякан вырăн çине кашни каçах чечек çыххи сапалăп. Ырă-ырă шăршă сарĕç вĕсем таврана. Сан ăшунта тĕвĕленнĕ пирĕн ачасем те ырă-ырă пулĕç. Вĕсен ачисем – пушшех те. Тăсăлĕ Вара пирĕн ăру малалла сыпăкран-сыпăка. Эпир вара санпа Атăл хĕрринче çĕнĕ çурт лартăпăр. Нумай-нумай чечек акса ӳстерĕпĕр. Сад пахчи те чечеке ларсан, пӳрт чечек ăшнех путĕ. Йĕри-тавра ачасем чупса çӳрĕç. Атăл енчен пирĕн чечек ăшĕнчи çурт çине яланах чун-чĕрене уçса яракан уçа сывлăш килĕ. Сад пахчине кайăксем иленĕç, хăйсен чĕвĕлти сассисемпе ирсерен çĕнĕ юрă кĕвĕлесе пире ыйхăран вăратĕç.
МАРИНА. Кĕвĕ... Илтетĕн-и, çывăхрах кĕвĕ илтĕнет. ку кĕвве Марк çеç калама пултарать. Турăçăм, хĕрхен пире.

*Андрейпа Марина ним пĕлми хытса тăраççĕ. Алăкран Марк кĕрет, вăл гитарапа.*

МАРИНА. Марк? Эсĕ?
МАРК. О, кама куратăп! Мĕнле майпа çĕр варринче? Каçар, кама-кама, анчах сана кунта кĕтменччĕ. Кĕтме те кĕтнĕ, килет темен. Чунри хăват сахалах мар иккен санăн та. Ăшри хĕлĕх сасси пĕр евĕр янăранă чух, курас тенĕ çынсем пĕрне-пĕри таçтан та шыраса тупаç иккен. Ну, сассуна пар.
МАРИНА. Эс ма кунта?
МАРК. Çакна пĕлме килтĕн-и эсĕ? Ку хĕлĕх янăравĕ мар. Тепĕр тесен, малтанласа кун пек те юрĕ. Кунта тĕлĕнмелли нимĕн те çук, эп хам килте. Эсир ак ăçтан йăтăнса антăр? Пирĕштисем мар пуль те? *(Андрей енне пуçне сĕлтсе.)* Ку тата кам? Таçта курнă пек, ниепле те аса илейместĕп. Ӳсĕр чухне курнă ахăр, ӳсĕр чухнехине эп ним те ас тумастăп. Паллаштаран пуль?
МАРИНА. Вăл... Веçех эс астăватăн.
МАРК. Шăллу-и? Çук, çиччĕмĕш сыпăкри пулсан кăна. Е кукаçун пуçанăшĕн ирĕксĕртен çуралнă тăван мар хĕрĕн ывăлĕ? Вăл та мар-и? Тен йĕкĕтӳ? А мĕн, пăхма пырать.
МАРИНА. Марк!
МАРК. Йĕкĕт те мар иккен. Паллах, ăçтан йĕкĕтӳ пултăр-ха, енчен те эсĕ суйласа илни самаях аслă чух. Ытла та тавçăрусăр вĕт-ха эп. Ку сапн аякри тăвану, йыхравпа килнĕскер. Е каччă çумĕ-и? Сирĕн мĕн, кĕçĕрех-и туй? Мана ма систерместĕр вара? Аттене çĕнĕ арăм туяннă ятпа саламлама килеттĕмех ĕнтĕ. Анчах та курăнмасть-ха вăл. Те хут çинчи арăмĕн ятне хураттарма кайнă. Юристсем тăрăх каччă пекех чупса çӳрет терĕç те. Ну, саламлап сана, çĕнĕ анне. Пылран та пылакрах пултăр санăн туту. Мĕнле, атте кăшт пăрăнсан, мана та ăна тутанма ирĕк паратăн пуль?
АНДРЕЙ. Итле-ха эс!..
МАРК. О, санăн хăну калаçма та пĕлет иккен, эпĕ ăна чĕлхесĕр пуль тесе. Ну, здравствуй. Марк тесе ят панă мана çуратса яракансем. Паллах çак ят мана пач килĕшмест. Тĕрĕссипе хама çеç мар, ыттисене те. Пĕлместĕп мĕне пĕлтерет вăл: те аçтахан, те çынçиен, те чунилли, те

шуйттан çеç. Анчах ман ята илтсенех пурин те тенӗ Пек сехри хӑпать. Куç умӗнчен часрах тарса пытанма тӑрӑшаç. Тупас тенӗ çынна эп, паллах, пурпӗрех тупатӑп. Хам тупаймасан, юлташсем тупса параççех. Аван вӑл юлташсем пурри, сывлама çӑмӑл вӗсем юнашар чухне. Пурте мансассӑн та, вӗсем вара манмаççӗ.
МАРИНА. Сансӑр ниме тӑмаççӗ Те-ха вӗсем.
МАРК. Ан тӗлӗнтер! Ытла та пысӑка хурса хаклатӑн-çке эсӗ мана. Пӗлменччӗ санӑн шухӑшна, аттту пулсан... Çапах та йӑнӑшатӑн эсӗ: вӗсем манран та пултаруллӑрах. Ан ман çакна.
МАРИНА. Кирлех пулсан юлташӗн курлине пӑвса лартма та пултараççӗ. Вӗсем кӳрсе ячӗç-и сана кунта? Ку юлташла, паллах. Вилме кӳрсе янӑ.
МАРК. Мӗншӗн вилме?
МАРИНА. Сана операци туни те тӑваттӑмӗш кун çеç.
МАРК. Вара мӗн? Сан ыратмасть-çке.
МАРИНА. Ухмах эс.
МАРК. Килӗшетӗп.
МАРИНА. Çынсене кӑна мар, хӑвна та шеллеместӗн.
МАРИНА. Ку та чӑн сӑмах.
МАРИНА. Наркотик пачӗç-и вӗсем сана?
МАРИНА. Çук, сана... Сана тупса пачӗç тата сан хӑнуна. Çав каçранпах эсир кунтан тухма пӗлместӗр терӗç те. Паллах пурте сивленӗ Хыççӑн санӑн ӑçта та пулдин пурӑнмаллах. Кунта вара вырӑнне те ӑшӑтса хунӑ, çитменнине утарçӑпа сӑмах килет. Савӑнӑçа пайлама та çын кирлӗ. Каçарӑр, хуйха тесшӗнччӗ. Сирӗн инкеке пула эп вилсе ӗлкӗреймерӗм.
МАРИНА. Мӗн калаçатӑн эс?! кам вырӑнне хуран мана?! Эп саншӑн...
МАРК. Маншӑн? Маншӑнах-и эс кунта? Вилӗм ман тавра явӑннӑ чухне те эс...
МАРИНА. Эп пытӑм сан патна, миана кӗртмерӗç. Кӗçӗр те пыма тухнӑччӗ, анчах...
АНДРЕЙ. Марина, çитет сана тӳрре тухса. *(Марка.)* Пӑтранса ан çӳре, кала тӳрех: сана питен мӗн кирлӗ?
МАРК. Сан тӳррӗн калаçас килет-и?
АНДРЕЙ. Çапла, эп çавӑншӑн тӑратӑп та кунта.

МАРК. Юрĕ, пĕтрĕ умсăмах. Тӳррĕн калаçас тетĕн пулсассăн, тӳррĕн калаçар. Тух урама.
АНДРЕЙ. Мĕн?
МАРК. Эс тĕрĕсех илтрĕн. Малтан манăн унпа сăмах пĕтермелле. *(Марина енне тĕллесе кăтартать.)*
АНДРЕЙ. Халь тин пирĕн пĕр-пĕринчен вăрттăнлăх çук.
МАРК. Халь тин? Çаплах-и? Ытла та хăвăрт мар-и?
АНДРЕЙ. Эс йăнăш ăнлантăн. Санпа пулнă инкек хыççăн...
МАРК. Инек – эс çак çуртра унпа юнашар пулнинче. Тата утарçă та пĕлсе тăрсах... Юрĕ, тух! Сан вăрттăнлăх пулмасассăн, манăн пур.
МАРИНА. Тух, Андрей.
АНДРЕЙ. Вăл сана каллех...
МАРК. «Каллех» халь саншăн пулĕ, эс çак самантрах тухмасан. Марина паçăр тĕрĕс асăрхарĕ, ӳсĕр чухне те эп мĕн курнине нимĕн те манмастăп. Ахальтен мар эпĕ кунта, кăна хăть тавçăртăн пуль тетĕп. Пуçна кăшт уçăлтар, анчах та аякка кайма сĕнместĕп, капкăна çакланма пултаран.
АНДРЕЙ. Марина, эп юнашарах пулатăп. *(Тухать.)*
МАРК. Андрей... Андрей тесе чĕнтĕн-и эс ăна? Андрейсенченех вилме тивнĕ-ши мана?
МАРИНА. Вăл сана вĕлерес темен. Эс ху пуçларăн, халь уншăн пирех айăплатăн. Ма килтĕн эс кунта, пире тавăрма-и? Ну, тавăр, эс тавăрма маçтăр. Пурăнма та памастăн,юратма та, чуна тыллама кăна пĕлетĕн. Çапла, эп айăплă сан умăнта сан хуйхуна хамăн ăша илнĕшĕн, сана тӳрĕ çул çине илсе тухас тенĕшĕн, ача пулсан тен улшăнĕ Тесе санранах ача çуратас тенĕшĕн. Эп айăплă. Сана мĕн, капла çăмăлрах-и?
МАРК. Эс мана пĕтнĕ çын тесе шутлатăн-и? Çак самантра ман чăн та тен çаплах пулас килет, анчах шалта, чун тĕпĕнче эп... Эс ăна туятăн пуль тесеччĕ. Çавăнпах хăть кампа пулсан та, чун сан еннех туртăнатчĕ, хăйне ăнланакан енне. Тен мана хама та йăлăхтарнă кун пек пурнăç. Тен ман та лăпкăн пурăнас килет, тен çемйе çавăрсах, тен санпах. Анчах ăшри пăлхану лăпланмасăр пултарайман эп. Юлашки вăхăтра манăн ĕçсе лартас килет ним пĕлми пуличчен. Эрехне çеç те мар, наркăмăшне те, юн чуппине чараканне.

МАРИНА. Эс никама та пурӑнма памастӑн: аҫупа аннӳне те, мана та, ыттисене те. Мӗн чух хӗре эс мӑшкӑлларӑн, мӗн чух ҫынна ҫаратрӑн – пурне те усал ҫеҫ тӑван. Чӑнах усал кӗрсе ларнӑ пуль санӑн ӑшна.

МАРК. Енчен тивлетсӗр ҫынсене усал теҫҫӗ Пулсан, ҫапла, эпӗ усал.

МАРИНА. Сан пек тивлетлине тепри ӑмсанӗ ҫеҫ. Сан пурте пур. Мӗн кирлӗ-ха тата сана?

МАРК. Тепри, тивлетлӗреххи. Пӑхса илесчӗ Манӑн ун ҫине куҫ хӗррипе те пулин юратупа ҫеҫ чыхӑннӑ ача мӗнле пулма пултарать-ха тесе. Вӑл мана ал та тӑсса памӗ-ха мана тивӗҫлӗ юратӑва хӑй туртса илнине пӗлсен те. Мӗнле шутлан, ал тӑсса парӗ-и? Ал тӑсса парсан вара мана никам та тек  кирлӗ пулмасть. Эпир унпа иксӗмӗрех чӑлханнӑ ҫӑмха вӗҫне тупатпӑр.

МАРИНА. Вӑл хӑйне юратнине пӗлмест те пуль-ха, эс вара ӑна айӑплатӑн.

МАРК. Пӗлет-и е пӗлмест, анчах та ӑна юратаҫҫӗ, ӑна кӗтеҫҫӗ. Мана вара... Эп вилсен те ман ҫине никам та пӗр чечек ҫыххи пырса хумӗ.

МАРИНА. Эс ху кӑна ҫапла шутлан, сана та юратаҫҫӗ.

МАРК. Кам? Кам мана юратать? Тӗллесе кӑтарт. Атте-и? Ун ӗмӗтӗ ман ҫинче мар. Анне-и? Юратнӑ ача ҫине ҫавӑн пек сӑмах ҫипӑҫтармаҫҫӗ. Е эсӗ? Качча тухиччене эпӗ сан ырӑнна варaларӑм-ҫке, кайран ҫӗҫӗпе хӑмсарма та вӑтанмарӑм. Мӗншӗнне пӗлетӗн-и? Чи пысӑк айӑп сан – старике илентерни. Пуриншӗн те Турӑ амӑш пулса пӗтеймӗн. Вӑл мӗнле ман ҫутӑ кунсене хупларӗ, эпӗ ту унӑнне ҫаплах хуплӑп. Унӑнне те, унӑн арӑмӗнне те. Аттепе хирӗҫсен ман пирки ялан калатчӗ: «Вӑл санран мар! Вӑл санран мар!»- тесе. Эп вӗсен мар, эп хам тӗллӗн ҫеҫ.

МАРИНА. Марк!

МАРК. Ан ӳкӗтле, эс те чараймӑн, тӳсчӗр эп тӳснӗ пек. Ма ман кӑна тӳсмелле? Хама ҫуратса яракана та эп леш арҫынпа пурӑнма памастӑп. Хӑр тӑлӑх юлӗ, ӗҫке ерӗ, пӗтӗ. Вӗсем ман ҫамрӑклӑха варaларӗҫ, ватрӗҫ, йӑлт акратрӗҫ. Пурнӑҫ тӗллевӗ те ҫухалчӗ. Йӑлт тӗттӗм ман умра. Ҫавӑнпа унталла сулӑнатӑп, кунталла сулӑнатӑп. Тӗпсӗрлӗх-и манӑн умра е

çӳллĕ ту – ним те курмастăп. Утатăп çеç ним çинчен шутламасăр. Çакăн пек чух инкек патне пырса çитетĕн е ырлăха кĕрсе ӳкетĕн – пурпĕрех. Ку айăп-и? Ку ыратни. Ох, епле ыратать хăш чух. Анчах çынсем ăна туймаççĕ.
МАРИНА. Туйсан халь мĕн тăвар-ха?
МАРК. Эс урăх, эс туятăн чун ыратнине. Çавăнпах чăтатăн та мана. Анчах чăтăмлăх виçесĕр мар, ывăнтарать пĕрмай чăтса, çавна пулах... Эп хытă ыраттартăм-и сана ун чух?
МАРИНА. Пĕр ыраттарнă чух хытă ыраттаран çав эс, час сипленмест. Çутă хĕвелĕн, çав чечексен, çак пурнăçăн хăйĕн тĕсне савна эп кăтартасшăнччĕ. Анчах та эсĕ хура куçлăхна хывса перес темерĕн.
МАРК. Пирĕн те лайăх вăхăтсем пулнă-çке. *(Гитара илсе выляма пуçлать.)* Аса ил-ха, пĕр каç кафене иккĕн çеç юлтăмăр та, çак юрă çуралчĕ. Эс сăмахĕсене шăрçаларăн, эп кĕввине. Чунра та лăпкă-лăпкăччĕ çав каç. Чунри хĕлĕхсем иксĕмĕрĕн те пĕр евĕр янăранă ахăр ун чухне. Пĕлетĕн-и, эсĕ мана çавăн чухнех ача пирки каланă пулсан, эп сана ал çинех çĕклесе илнĕ пулăттăм, тепĕр кунне çураçмах пыраттăм, анчах... Каçар мана эс, ухмаха. Тен усалли пирки манса ыррине çĕнĕрен аса илер? Юрла-ха хамăрăн юрра. Юрла, Марина, ма юрламастăн? Шел, лайăх юрăччĕ. *(Пауза.)* Эс ку ачана çав каçранпа кăна пĕлетĕн-и?
МАРИНА. Çапла.
МАРК. Халь вара ма вăл санпа? Инкек çывăхлатать сире е...
МАРИНА. Вăл урăх çын, вăл сан пек мар. Кăмăлĕ ырă, çынна усал тăвакан мар. Вăл кунта пĕтĕмпех каласа пама килчĕ, каçару ыйтма. Вăл таркăн мар, çын айăпне те хăйĕн тесе йышăнать. Ăна пула пулмарĕ Ку инкек, иксĕмĕре пула кăна-çке. Каçар эсĕ ăна. Енчен те эсĕ ăна çывăхрах пĕлнĕ пулсан, сăмахсăрах каçарнă пулăттăн. Пĕлесчĕ сан, мĕн анлăш унăн чунĕ, мĕнле ăшă унпа юнашар чух. Ыратни-хăрани унпа калаççанах иртсе каять. Ун пек çынна юратса çеç тăрас килет. Марк, эс ухмах мар-çке, эс ăнланма тивĕç...
МАРК. Çитĕ! Чарăн! Тек ним те ан кала. Пуç çаврăна пуçларĕ.
МАРИНА. Эс чирлĕ Халь, сан выртмалла. Медикĕсем те... Çын операци хыççăн тухса каять, вĕсем вара сисмеç те, шырамаç те...

МАРК. Ан васка мана эс унта ăсатма, ĕлкĕретĕп-ха. Чĕн-ха ăна.
МАРИНА. Чĕн? Анчах мĕн тесшĕн эс ăна? Каçаратăн-и?
МАРК. Чĕн!
МАРИНА. Е айăпласшăн-и? Марк, йăлăнатăп, Туршăн та пулин... Атя малтанах калаçса татăлар: айăплас тесен мана айăпла, ăна вара ан тĕкĕн. Çук, шелленĕрен çеç мар унпа эпĕ паянхи кун, юратнăран. Çапла, эп юрататăп ăна, юрататăп. Эс, паллах,  пире уйăрма та пултаран, анчах та юратма чараймастăн.
МАРК. Çитĕ! Курăпăр-ха эс ăна мĕнлерех юранине.
АНДРЕЙ *(вирхĕнсе кĕрсе).* Марина, çитĕ Сана тӳрре тухса, çĕклен. Пĕлместĕп, мĕнле приговор çырнă эсĕ ман валли, аначх пурпĕр эпĕ санран каçару ыйтатăп. Асамçă пулсан сан суранна та хам çине илнĕ пулăттăм, шел асамçă мар.
МАРК. Суран... Ку мĕн, суран-и? Чĕрери суран вара... Шел, çĕççин тарăнрах кĕмелле пулнă, вара мĕнешкел ырлăх пулнă пулĕччĕ халь маншăн.
МАРИНА. Мĕн калаçатăн эс!
МАРК. Çаплах ара, вилнĕ Пулсан, сире хӳтĕлекен пулмасчĕ. Апла вилнĕ-и е капла – вĕлернĕ тетчĕç, факт. Капла вара...
МАРИНА. Эппин эс каçаратăн? Марк, тавах сана.
АНДРЕЙ. Енчен те сана манран мĕн те пулин кирлĕ пулсан...
МАРК. Кирлĕ, эс кайни. Халех, çак самантрах. Эп сана каçаратăп, ирĕке яратăп. Анчах текех сана кунта тек нихăçан та курам мар. *(Маринана.)* Эс вара... Санпа эпир иксĕмĕр калаçса татăлнă пекех кунта юлатпăр.
МАРИНА. Мĕнле – «калаçса татăлнă пек»?
АНДРЕЙ. Çук, Манринана кунта эп хăвармастăп.
МАРК. Марина, кала ăна, кайтăр.
МАРИНА. Марк, йăлăнатăп, ан чар мана.
АНДРЕЙ. Ман вырăна эс ăна тăвăрасшăн-и? Апла пулсассăн эп юлатăп, ăна яр. Хам вырăна теприне айăплама эп ирĕк памастăп.
МАРК. Марина,васкат хăнăна.
МАРИНА. Марк, йĕксĕк те вĕт-ха эс. Татăкăн-татăкăн манăн телее касса илетĕн. Неушлĕ эпĕ телей тенине пачах та тивĕç мар? Çын телейне туртса илнипе ху телейлĕрех пулатăп

тетĕн-и? Эп сана хĕрхентĕм-çке, юратмасан та пултарнă таран хамăн ăшша пама тăрăшрăм, эс вара... Эп малтанах пĕлнĕ, пĕлнĕ лайăхпа вĕçленмессе, анчах шанас килетчĕ. Çынна шанма хăнăхнă та. Мĕнех, Турри çапла çырнă темелли çеç юлать. Андрей, кай.

АНДРЕЙ. Çук, сансăр çук. Ан хăра унран, вăл пире нимĕн те тăваймасть. Кайрăмăр кунтан.

МАРК *(сасартăк кĕсйинчен пистолет кăларса вĕсен енне тĕллет).* Тăхта! Эп сана асăрхаттартăм, эс итлемерĕн. Юрĕ, юл. Кунта пĕр пуля çеç. Пĕлместĕп кама ытларах вăл юратать, анчах мана мар пулсан, эп хама телейлĕрех туйнă пулăттăм. Халлĕхе эп ăна сан енне тĕллетĕп, анчах пĕр хускану çеç ту – Марина енне куçĕ ун кĕпçи.

АНДРЕЙ. Ав еплерех çын иккен эс, пистолетпа хăратасшăн.

МАРК. Ан хăюллан, асна ку килĕшмест. Тăр вырăнта. Марина, эс ман пата кил.

АНДРЕЙ. Çук, ан итле ăна. *(Маринана ярса тытать.)*

МАРК. Марина, сан вăл мĕнле вилнине курас килет-и?

АНДРЕЙ. Марина, петĕр, ямастăп эп сана.

МАРК. Юрĕ, санла пултăр, кун пек тата та киленӳллĕрех пулĕ. Суран мĕнле йывăр пулсан та, эп хамах салтăнăп. Хĕре вара хăй салтăнса йĕкĕт çумне пырса выртни килĕшмест. Ман вырăна Маринана салтăнтарсам.

АНДРЕЙ. Эсĕ! Пĕлетĕн-и эс кам?!

МАРК. Пĕлетĕп, ун каччи. Эс тĕлĕнетĕн-и? Е эпĕ унпа халь пирвайхи хут тетĕн-и? Е савăшмасăрах вăл манран ача кĕтет тетĕн-и?

МАРИНА. Мĕн пирки калаçатăн эсĕ?! Мĕнле ача?! Андрее манран пистернипе кăмăл сан енне çаврăнĕ Тетĕн-и? Хăть те мĕнле мана варалама пăхсан та, эпĕ тек нихăçан та санăн пулмăп. Ман çине мар, хăвăн ачу çине çĕçĕ çĕклерĕн эс. Тен çавăнпах вăл пурăнас темерĕ. Вĕлертĕн эс ăна! Çук, хăратмасть текех мана сан çĕççӳ те, пистолету та. Манран мĕскер туртса илме пулать, йăлт туртса илтĕн эсĕ. Кураймастăп эп сана! (Марка çапаççапа ярать, чышать, хĕнет, леш пĕр çĕре пырса тăрăнать, ахлатса хырăмне ярса тытаилет те ӳкет.) Андрей, каçар мана, ман маларах каламаллаччĕ сана кун пирки, анчах та эпĕ...

АНДРЕЙ. Ан айӑпла хӑвна. Эп малтанах пӗлнӗ эсӗ ача кӗтнине. Ку манӑн туйӑма улӑштарма пултараймасть. Анчах та халь... Ма килтӗмӗр-ха эпир ку утара? Мӗскер кӗтетпӗр, тепӗр инкек пуласса-и? Каймалла кунтан, анчах... Кафере телефон пур-и?
МАРИНА. Пур.
АНДРЕЙ. Васкавлӑ пулӑшӑва унтан шӑнкӑравласа калӑпӑр. Атя.

*Кайма тӑраҫҫӗ, ҫав вӑхӑтра ашшӗ кӗрет.*

АШШӖ. Ачасем! Тавах Турра, эсир кунта, пӗрле. Тинех иккен, тинех кӗтнӗ кун ҫитрӗ. Мӗнле савӑнӑҫ. Ну, атьӑр тӳрех сӗтел ҫине хатӗрлеме пуҫлар. *(Марка курса.)* Марк? Эс вара мӗнле майпа кунта?
МАРК. Мӗн, манпа пайлас теместӗн-и хӑвӑн савӑнӑҫна?
АШШӖ. Ма? Эсӗ те кунта пулни лайӑх та. Шӑпах сире пурне те кунта курасшӑнччӗ Те эпӗ. Анчах сан сурану... Сана халь йывӑр-ҫке, сан выртмалла.
МАРК. Ман суран ҫинчен. Кала савӑнӑҫна.
АШШӖ. Пӗлместӗп, ӑнланӑр-ши эсир мана, анчах та ку телей вӑл. Ку чи пысӑк телей.
МАРК. Телей? Эс те телейлӗ-и паянхи кун?
АШШӖ. Ҫапла-ҫапла, эс ӑнланма та пултараймастӑн мӗнле телейлӗ Эп паянхи кун.
МАРК. Эп ӑнлантӑм пулмалла эсир ма телейлине. Телей – ак ҫакӑ вӑл. *(Кӗпи айӗнчен аллине туртса кӑларать, ун алии юн кӑна.)*
МАРИНА. Юн. Турӑҫӑм, ун суранӗ Кҫӑлнӑ.
МАРК. Юн? Мӗн вӑл юн? Телей хуҫи. Юн таппи, юн туртӑмӗ, юн пӗрлешни е юн юхни – веҫех телей. Ҫапла-ҫапла, юхни те. Ҫын ҫинчи юн хӑрушла курӑнать, хамӑр ҫинчи вара... Ӑна чӑтма пулать, мӗншӗн тесен урӑх куҫпа пӑхма пуҫлать этем телей ҫине. Эпӗ тӑна кӗрсен нумай шутларӑм, вара ҫакна тепӗр хут ӑнлантӑм: эп йӑнӑшман, ҫынсем пурте тенӗ Пек шаккалсем, юн ӗҫме юратакансем. Эпӗ вара ку таранччен хамӑн йӗри-тавра этем сӑнлӑ ҫынсем шыратӑп. Хаш-пӗр чухне чӑн-чӑн этеме тупнӑнах туйӑнатчӗ, анчах каярахпа ҫав

çын çине тепре çаврăнса пăхатăн та, хăсас килет. Хăвăр çине кăна ан илĕр манăн сăмаха, эп хам та çавах пулнă. Пĕлетĕр-и ма йăнăшать этем? Хăй телейне çылăхра курнинче, çылăх пылакĕнче. Киленĕве пула вăл çылăха кĕрет е кĕсье тулли укçа пултăр тесе, тăшманĕн куççульне кура пылак туять е çуратас темен ачинчен хăтăлнинче – пурпĕр мар-и? Пирĕншĕн пылак пултăр çак самант. Кайран вара тăна кĕрсен... Ун пылак пулмалла мар-çке, ку суя тутă. Çылăх-тăк, çылăх тути урăх, йӳçĕ Пулмалла. Чăн тутине туйманнипе çынсем çунатланаç вара, тата-тата çылăх тăваç. Пылак яланах илĕртет те-ха. Пылакĕ Виçесĕрех пулсан, çӳл тӳпенех ухаç, телейлĕ Теççĕ Хăйсене. *(Алли çинчи юнне кăтартса.)* Тен çакă та пылак? Тутанса пăхас килмест-и? Ма пăрăнатăр? Тавах сире, нумай япалана ăнлантăм эп сире пула. *(Ашшĕне.)* Сана уйрăммăн тав. Тĕнче илемлĕ! Çылăх та йӳçĕ Мар, пылак! Анчах ман валли мар унăн пылакĕ. Йăлăхтарчĕ! Тек мана нимĕн те кирлĕ мар. Пурăнăр киленсе. *(Кайма тăрать.)*

АШШĔ. Марк, тăхта, ан кай.

МАРК. Эс вара яланлăхах пăрăн ман çул çинчен. Ман манăн ята, эпĕ – санне.

АШШĔ. Пĕлетĕп, ман та айăп пур сан умăнта, анчах каласа пĕтерме пар, ывăлăм.

МАРК. Ан хăй, ан хăй мана тек ывăлăм теме! Ан хăй! Эп сан ывăлу мар, эп санран мар! Кала-ха тӳррипе, мĕн пытаратăн эсĕ ăшунта? *(Андрей çине тĕллесе.)* Ма вăл кунта тăрать? Эсĕ пĕлетĕн-çке эпĕ ăна пула... Ма эсĕ лăпкă? Ма ыйтатăп-ши, капла та веçех паллă. Анне пăрахса кайсан та лăпкăн юлтăн, эп санран ютшăнсан та, халĕ те.

АШШĔ. Мĕншĕн тесен...

МАРК. Мĕншĕн тесен эс пире юратман: аннене те, мана та. *(Ашшĕ тем каласшăн.)* Ан суй, эс юратман. Эс пĕр çынна çеç юратнă, каферен кăшт аяларах ун ячĕпе çул хĕрринче палăк ларать. Мана суя юрату шантарса ан тăр. Пыр, яланхилле чечек çыххине йăт та кай ун патне.

МАРИНА *(тавçăрса).* Чечек çыххи... Чечек çыххи... Мĕнле-ха эпĕ çавăн чухнех тавçăрса илеймерĕм. Эп пĕлнĕ-çке Энтри тете унта... Кун пирки пурте пĕлеççĕ. Андрей, эсĕ те çав кас

чечек çыххи йăтса тухса кайрăн. Чи çывăх çын валли терĕн-иха эс вăл чечексене? Паллах, тата мĕн хистетĕр-ха çынна çумăр айĕнче вăрман ăшĕнче юлашки автобусран анса юлма аннене юратни хистемесĕр.
МАРК. Çук, пулма пултараймасть. Суя ку! Эп ĕненместĕп!
АШШĔ. Андрей, çакăнта пирвай килсе кĕрсессĕнех илентĕм эп сана, анчах тавçăрса илеймерĕм. Те ӳсĕр пулнăран, те... Килсе кĕрсен те çавăн пек килсе кĕрĕ темен пуль. Марк юлташĕсем вара çав каç çав ачана çав палăк патне чечек çыххи пырса хунине куртăмăр тесен...
АНДРЕЙ. Эпĕ туяттăм... Туяттăм çак таврарах мана çывăх çынсем пурăннине. Çемьепе отпуска килнĕ Чухне эпир Сенгилене яланах çак çулпа каяттăмăр, анне палăкĕ çине чечек çыххи хурас тесе. Анчах кашнинчех мана пĕр япала тĕлĕнтеретчĕ: çул хĕрринчи ытти палăксем йĕри-тавра çум курăкĕ кăна ӳсетчĕ, анне палăкĕ Вара яланах чечек ăшĕнчеччĕ.
АШШĔ *(Андрея ыталаса илсе).* Ывăлăм...
АНДРЕЙ (Марк енне аллине тăсса). Марк...
МАРК. Тăнсăр пурнăç ку.
АШШĔ. Телей ку, Марк.
МАРК *(Андрее).* Эп сана курайман. Эп сана ылханнă. Эп сан пирки мĕн ачаранах пĕлнĕ, мĕншĕн тесен пирĕн килте харкашу-çапăçу яланах сан пирки пуçланнă. Пыл илме килмен санăн аннӳ ун чух кунта, сана аттене кăтартма. Анне айăплă мар санăн аннӳ машинипе çапăнса вилнĕшĕн, эпĕ те айăплă мар. *(Ашшĕ çине тĕллесе.)* Вăл айăплă. Савнийĕ йывăр çын пулнине пĕлсе, авланмалла пулман анне çине.
АШШĔ. Эп пĕлмен вăл ача кĕтнине, вăл мана ним те каламан. Тен калатчĕ те пуль, анчах... Айăплă эп, айăплă, йышăнатăп. Пĕррехинче канмалли кун Сенгилейĕнчен яла таврăнсан, эп пĕр уява лекрĕм. Унта Марк амăшĕ те пурччĕ. Уявра, паллах, ĕçнĕ, савăннă, кайран... Çамрăк пулнă-çке, юн вылянă.
МАРИНА. Йăнăшасси такампа та пулĕ. Хăвăр кам-ши? Çынна айăпличчен хăвăр çине çаврăнса пăхăр.Аçун хуйхине ăнланса çур утăм та пулин турăр-и эсир ун енне? Аннӳ тавăрас тесе

тепринпе çыхланса кайнă, эс тавăрас тесе... Юратать-çке вăл сана. Тата мĕскер кĕтетĕр-ха унран?
МАРК. Ирĕксĕртен çуралнă ачана та-и?
АШШĔ. Марк, ан кала ун пек. Ирĕксĕртен авланнă пулсан та, эс çуралсан килĕштерсех пурăнаттăмăр эпир. Эс пире аннӳпе иксĕмĕре çывăхлатрăн. Анчах Андрей амăшĕпе инкек пулнă хыççăн... Сан аннӳне те ăнланатăп эпĕ, мăшăр тени теприн çинчен шутлани кама килĕштĕр. Анчах юратнă çынна епле манăн-ха? Ман вырăнта пулнă пулсан мĕн тунă пулăттăн ху вара?
МАРК. Ма паян çеç пулчĕ Пирĕн çак калаçу? ма маларах пулмарĕ? Эп вĕт хам та çакна кăна кĕтнĕ, пĕр-пĕрне чунсене уçса парасса. Малтанхи пекех пĕр семьепе пурăнасса. *(Андрее.)* Сана та кĕтнĕ.
АНДРЕЙ. Эп хам та сана курас тенĕ. Çавăнпах çӳрçĕре вĕçсе каймарăм та. Эп шаннă сана тупасса.
АШШĔ. Эс вара тĕлĕнен эп ма телейлипе. Çак телее укçапа виçме пулать-и вара? Каçар та, йĕксĕксем вĕсем, сан юлташусем. Вăрттăнлăха тытма пĕлеççĕ, ăна сутма та. *(Андрее.)* Эс камне пĕлнĕ хыççăн укçа хĕрхенсе тăма пултарнă-и вара эпĕ? Укçа татах пулать вăл, ан ӳркен кăна.
МАРК. Çапла-и-ха вĕсем манран вăрттăн... Ну, эпĕ вĕсене... *(Кайма тăрать.)*
АШШĔ. Марк, ăçта эс? Ан кай, сур вĕсем çине. Кам пĕлет, тата тепле шухăш-ха вĕсен пуçĕнче. Хăвна та кунта ырăшăн кӳрсе яман.
АНДРЕЙ. Марк, атя иккĕн...
МАРК. Çук, эпĕ хамах.
АШШĔ *(пӳлсе).* Ямастăп!
МАРК *(ашшĕне пĕтĕм вăйран сулăнса чышса ярать).* Пăрăн çул çинчен! *(Хăй çийĕнчех хырăмне ярса илет те пĕтĕрĕнсе ӳкет.)*
МАРИНА. Ун суранĕ уçăлнă. Мĕн чухлĕ юн.
АШШĔ. Эх, ывăлăм, çын каланине ма итлеместĕн-ши?
АНДРЕЙ. Машина килчĕ. Эп хăвăрт аслă çул çине. *(Чупса тухса каять.)*
МАРК. Çук, ан кай! Чар ăна, атте. Ăна вĕлереççĕ, ăна тарать тесе шутлаç.

АШШĔ. Çук, пулма пултараймасть. Халĕ-и? Çакăн хыççăн-и?
МАРК. Вĕсем вăрман ăшĕнче лараç. Эпир калаçса татăлнăччĕ тарас тăвас пулсан тесе. Марина, чуп!
АШШĔ. Эп вĕсене мĕн чухлĕ укçа патăм ан тĕкĕнччĕр тесе.
МАРК. Вĕсем пĕлеç сывалсан эп вĕсене çав укçашăн чунĕсене кăларса илессе, çавăнпах... Вĕсем чее çынсем, иккĕлле çаптараç. Эп тавçăртăм тинех: вĕсем эп Андрее вĕлерессе кĕтнĕ, ман вилĕме те. Каçар, атте. Çăл Андрее. *(Пистолет кăларса парать.)*
АШШĔ. Ну эпĕ вĕсене...

*Ашшĕ пистолет илсе тухса каять. Аякра çапăçнă, пенĕ Шав илтĕнет. Марк тăма хăтланать, анчах ыратнипе тĕшĕрĕлсе анать. Кайран тепре сĕтелтен уртăнса тăма пăхать, каллех ӳкет. Ӳкнĕ Май сĕтел çиттине туртса антарать, сĕтел çинчи Библи ун çине ӳкет. Кăшт тăрсан ашшĕ вилнĕ Андрее йăтса кĕрет, Маркпа юнашар хурать. Марина кĕрсе хӳхлет.*

МАРК *(пуçне çĕклесе).* Эй, Турă, каçарсам...

*Чаршав.* 2000çул